9441
СЧ-29



ВАЛЕНТИНА
ЭЛЬБИ

# ТĂРĂР ВĂЙĂ КАРТИНЕ



9441

Валентина Эльби

# ТĂРĂР ВĂЙĂ КАРТИНЕ



ЧĂВАШ АССР КĔНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар — 1964

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ ЭКЗЕМПЛЯР
ДОСТАВКИ
Чувашской Книжной Палаты
5 января 1965 г.
№ 353

## ХАКЛĂ АЧАСЕМ!

Кирек хăш кĕнекене вуласан та эсир мĕн те пулин çĕннине пĕлетĕр. Ку кĕнеке те сире тантăшусен пурнăçĕнче пулса иртнĕ инкек-синкеклĕ ĕçсемпе паллаштарать.

«ТĂРĂР ВĂЙĂ КАРТИНЕ» калав геройĕ, Ксей ятлă ача, хăйсен килĕнче пукане театрĕ уçать. Тантăшĕсене вăл театра укçалла çеç кĕртет. Укçипе канфет иле-иле çиет. Пуçĕнче унăн мĕн пурĕ те укçа ытларах пухас шухăш çеç. Ксей çапла хăтланни юлташĕсене килĕшмест, тарăхтарать. Вĕсем ăна тӳрĕ çул çине кăларасшăн тăрăшаççĕ, мĕншĕн тесен пурин те пĕр вăйă картинче пулас килет.

«ӲСНĔ ЧУХ» повеçри улттăмĕш класра вĕренекен ача — Актай — халăхран пăрăнса çӳрекен пиччĕшĕ улталанипе чутах усал çул çине тăмасть. Ăна Тина вожатăй тата юлташĕсем инкекрен çăлаççĕ. Çак кĕрешӳ мĕнле пулса иртнине хăвăр вуласа хăвăр пĕлĕр.

---

Рисунки художника А. Т. Скворцова



## ТĂРĂР ВĂЙĂ КАРТИНЕ

Калав

Çĕр çинче пур-ши пирĕн ял ачисем пек вăйă выляма юратакансем? Темĕн çав. Мĕн кăна шухăшласа кăлармаççĕ вĕсем! Уйрăмах — çуллахи кунсенче. Чăннипех те савăнма пĕлеççĕ. Калас пулать, вăйă яланах тикĕс, инкек-синкексĕр иртмест. Халăхра та: вăйăран вăкăр тухать, теççĕ. Тепĕр чухне ху пуçарнă вăйăшăн юлташсем умĕнче хытах намăсланма тивет. Мĕнех вара, ун пек чух ăса çеç вĕренен.

Униче карти урлă каçса кĕрер-ха, кур, паллаш пирĕн ял ачисемпе.

Урамĕсем еплерех аслă пирĕн, çурчĕсем кервен. Йĕри-таврa йывăççем ешереççĕ.

Чим-ха! Иртсе ан кай. Тăнла.

— Тусăмсем, юлташсем, тантăшсем! Театр курма васкăр! Билечĕ хаклă мар, пилĕк пус çеç тăрать! Укçа çук пулсан, пĕр çăмарта памалла!

Кăна эпĕ — Ксей, ачасене йыхăратăп. Эпĕ хапхапа кĕлет хушшинчи юпа çине хăпарса тăнă. Кунтан мана таçти, таçти урамри ачасем те аванах курма пултараççĕ. Сассăм та таçта çитиех янăрать. Итлесе пăх акă:

— Хо-хо-хо-хо-о-о-о! Ки-л-се-мĕ-ёрр!

Хам килте пукане театрĕ уçнăранпа та паянхи пек хĕремесленсе кăшкăрман пулĕ.

Çапла, эпĕ килте пукане театрĕ уçрăм. Ĕненместĕн пулсан, хапха тăррине хăма çине çырса çапнине вула: «Пукане театрĕ». Юнашарах «Кассă», тесе çырса хунă. Кассăн чӳречи те пур. Хапха хăмине пăчкăпа хамах касса кăлартăм. Ну, мĕнрен кая? Мĕншĕн театр тес мар?

Мĕншĕн пĕр ача та çук? Ачасем сан театрна курма юратмаççĕ-и, тесе ыйтатăн-и? Юрататчĕç. Питĕ килĕштеретчĕç. Пĕр эрне каярах курасчĕ! Ачасем хапха умĕнче лăках хĕвĕшсе тăратчĕç. «Мана кĕрт! Мана!» — тесе тĕпĕртететчĕç. Кассăна пĕрисем — укçа, теприсем — çăмарта тăсатчĕç. Эпĕ вĕсене билетсем параттăм. Чăн-чăн билетсемех турăм, тĕрлĕ тĕслĕ сăрсемпе илемлетсе çыртăм.

Хĕлип ачасене кĕçĕн калинккерен картишне — театра (театрĕ ман ампар умĕнче) кĕртсе тăрать. Паллах, вăл кашниннех билечĕсене тĕрĕслет. Пирĕн ял ачисем усал мар, билетсăр кĕме хăтланакансем çук. Анчах та театрăн йĕрки çапла: билет тĕрĕслемелле. Хĕлип текенскер кам, тетĕн-и? Хĕлип вăл ман помощник, манпа пĕр класра вĕренекен ача. Никам илтиччен калам: унăн пысăк çитменлĕх пур, вăл ĕмĕтсĕртерех. Яланах манран канфет ытларах илме хапсăнать. Кĕттĕр, парăп эпĕ ăна ытлашши, тыт кукиш.

Картиш тулли пухăнатчĕç ачасем. Пуканесем вылянине каçса кайсах пăхатчĕç. Айвансем! Тăлавартан çĕленĕ анчăк вĕрсе ярсан, ахăлтататчĕç вара вĕсем. Никам тытса чараймĕ. Пукане-асанне калаçни те вĕсене култарать. Йытăшăн та эпех вĕрнине, пуканешĕн те эпех калаçнине нивушлĕ тавçăраймастчĕç-ши?

Ачасенчен, пухăннă укçапа çăмартасене ăçта хуратăн, тетĕн-и? Ку ниме юрăхсăр ыйту. Вăйă пулин те, ку — ĕçлени. Артистсем вылянăшăн шалу илеççĕ-и? Илеççĕ. Манăн ма илес мар. Апла пулсан, хам ĕçлесе тупнă укçана кама парас? Вăл ман укçа. Çав укçапа мĕн тăвас тенĕ, çавна тăватăп. Лавккана кайса канфет туянатăп. Эх, пылак-çке канфечĕ. Чĕлхе çинче ирĕлет, ирĕлет те йанк! çеç анса каять. Ман тата тепĕр пысăк ĕмĕт пур. Пукане театрĕ кăтартса пухнă укçапа велосипед туянатăп! Ярăнатăп, ярăнатăп... Пĕлсех тăратăп, ман тавра ача-пăча найлатĕ. Пурте лартса чуптарма йăлăнĕç. Эпĕ хыт

кукар мар, тархасшăн. Пилĕк пус патăр та, ав çав юман йывăççи патне çитсе килтĕр. Ярăннăшăн кам укçа патăр, тетĕр-и? Ай-ай, чее. Велосипечĕ камăн? Манăн. Ярăнас килет пулсан,— укçа патăр, ярăнас килмесен — ан çулăхтăр. Ку укçапа мĕн тăватăн, тетĕн-и? Чăнах, мĕн тăватăп-ха укçипе? Кун çинчен тĕплĕн шухăшламан-ха. Тен... Çук, халь мар, тепĕр чух калăп.

Çапла... Темиçе кун хушши тарăхатăп. Театр куракансем килмеççĕ. Юпа тăрринче тăр ĕнтĕ кăшкăрса. Мĕншĕн килмеççĕ? Сисетĕп. Ман шутпа сăлтавĕ — Çуппара. Вăл кунта килсе çаврăниччен ман ĕç пыл та çуччĕ. Пĕтĕмпех пăсрĕ. Çуппа вăл манпа пĕр класра вĕренекенскер. Тӳрех калатăп: питĕ чипер хĕрача. Анчах та чиперринчен ытла унра темле асамлă вăй пур. Калать çеç, пĕтĕм ача ăна итлет, вăл мĕн хушнине тăвать. Кирек кама та хăй майлă çавăрать. Эпĕ ун куçĕнчен пăхма та вăтанатăп. Куçĕсем унăн хуп-хура та йăлтăркка — икĕ пиçнĕ çĕмĕрт. Ăнлантăн-и, мĕнлескер çав хĕрача. Ачасем театра çӳреме пăрахнăшăн мĕншĕн Çуппана айăплатăп? Акă мĕншĕн. Вăл ман пата килнĕ кун пирĕн хапха умĕнче çын ярмăрккăри пекехчĕ. Пурте театра кĕресшĕн тĕрмешрĕç. Ачасем картишне кĕрсе пĕтнĕпе пĕрехчĕ ĕнтĕ, сасартăк курах кайрăм: пирĕн кĕçĕн калинкке умне Çуппа пырса чарăнчĕ. Эпĕ, кассă чӳречинчен пăхса лараканскер, ăна таçтанах асăрхарăм. Ахаль те хитрескер, вăл çу кунĕсенче татах çавракаланса кайнă. Хĕрлĕ галстук çыхнăран-и, пичĕ-куçĕ çап-çутă çуталса тăрать. Темшĕн вăл ытти хĕрачасем евĕр мар, çӳçне, кĕске пулин те, пĕр çивĕте çивĕтлет.

Çуппа тӳрех театра кĕресшĕн пулчĕ. Анчах Хĕлип калинкке урлă урине тăсрĕ те:

— Билет?— тесе ыйтрĕ.

— Манăн унашкал япала çук вара.

— Çук пулсан туян, унсăрăн театра кĕрейместĕн,— лаплаттарса хучĕ Хĕлип, унтан аллипе ман еннелле тăсса каларĕ:— Веç, куратăн-и «кассă» тесе çырнине? Çавăнта билет сутаççĕ те.

— Билет туянмалла эппин?— терĕ Çуппа.

Чухласа юлаймарăм сассинчен, те тăрăхласа, те чăнласах каларĕ вăл. Пуçне каçăртса Çуппа кассă умне пырса тăчĕ.

— Мĕн хак билет?— ыйтрĕ вăл.

— Пилĕк пус,— терĕм.— Е...

Пуçланă сăмаха каласа пĕтерейменрĕм. Çуппа çат! хурса пачĕ пилĕк пус укçа. Эпĕ ăна йăпăр-япăр ярса илесшĕнччĕ. Анчах ман ăша ют çын кĕрсе ларнă, тейĕн, аллăма каялла яш турттарчĕ. «Мĕн тума кĕртен ăна театра? Ку хĕрачасăр авантарах, хăюллăрах пулĕ сана...»—пăшăлтатрĕ ăшри ют этем. Вара ирĕксĕрех çапла каларăм:

— Сана билет сутмастăп, театра кĕртместĕп.

Билетсем чӳрече янаххи çинчех тăратчĕç. Сиссе те юлай-

марăм, Çуппа пĕр билетне хап ярса тытрĕ те кулса каларĕ:

— Билечĕ ман алăра, укçи сан алăра.

Вĕçтерчĕ вара хăй Хĕлип патнелле. Лешĕ, паллах, ăна-кăна сисменскер, чарма шутламарĕ те.

Кăмăлăм пăсăлчĕ. Ун умĕнче, пĕлсех тăратăп, пуканесене вылятма ал-ура, чĕлхе-çăвар çавăрăнас çук, тата вăл кăлтăк тупса тиркешетех. Мĕн тăвас? Шухăша кайса, пусăрăнса тăни кăлăхах, килĕшӳсĕр. «Ксей, ăçтиçук хĕрачашăн пуçна ан ус! Малалла!»—командă патăм хама хам. Анчах мĕн мурĕ? Кассă умĕнчен хăпаймастăп. Билетсене сутса пĕтерейменни тытса чарать-ши? Ура мĕншĕн тăр-р-тăр-р чĕтрет? Эх, хăямат. Хĕлип çаплах калинкке патĕнче тăрать.

— Питĕр!— кăшкăртăм Хĕлипе, алла сулса. Лешĕ ăнланмасть.

— Мĕ-ĕн?— тет.

— Калинккене питĕр, теççĕ сана?

Сассăм темле урмăшса тухрĕ. Хĕлип ман пата пычĕ. Хăй хаваслă.

— Ксей,— тет вăл,— паян чăн-чăн пысăк театрти пекех, халăх йăтăнчĕ кăна. Укçа енчĕкĕ самаях тулчĕ пулас?

Манăн çиллĕм килчĕ. Мĕн ĕç пур унăн укçа çинчен калаçма? Эпĕ пухнă укçа унăн кĕсйине кĕрсе выртнăнах пакăлтатать. Тăвасчĕ хăйĕн ĕçне лайăххрах. Çуппана кĕртсе янă ав.

Çапах та Хĕлип каланă хыççăн енчĕке силлесе пăхмасăр тӳсеймерĕм. Чăнкăр-р! чăнкăр-р! чăнкăртатать вак укçа.

— Пурака, пурака пăх-ха эсĕ, Ксей,— сĕнет мана каллех Хĕлип тĕлĕнсе.

Пуракри çăмартасене курсан тата вак укçа чăнкăртатнине илтсен, кăмăлăм çĕкленчĕ. Шутла-ха эсĕ, пукане театрĕ курма килнĕ ачасенчен камăн та пулин çакăн чухлĕ укçа пур-и? Паллах, çук. Вĕсем кашниех е амăшĕнчен, е ашшĕнчен йăлăнса илнĕ çав пилĕкшер пуса. Манăн хамăн. Укçа! Укçа!

Эпĕ укçа енчĕкне кĕсъене персе чикрĕм те, çăмарта пуракне хул айне хĕстерсе, патваррăн утрăм. Ма именес? Уйрăмах Çуппаран? Тупăннă отряд совечĕн председателĕ. Суйласан такам та председатель пулма пултарать. Вăтанма эпĕ ним те вăрламан.

— Хĕлип! Ут хăюллăрах,— терĕм хама хастарлантарас шутпа.

Хĕлип лиска йытă евĕрех, лĕпĕстетрĕ ман хыççăн.

Ампар умĕнче халăх тулли. Тĕрĕссипе каласан, халăх мар, ача-пăча. Кĕтеççĕ мана, артиста. Эпĕ çитсен, вĕсем шăпланчĕç. Хăйсене чăн-чăн театр куракансем пекех тыткалаççĕ.

Ку хутĕнче кулисă хыçне Хĕлипе те чĕнтĕм. Пĕр пуканине выляттăр хуть, усси çавăнта пултăр.

Манăн пуканесемпе пĕрле «Çарăк» ятлă юмаха выляса

памалла. Юмахри ĕçсем пирки чаранса тăмастăп, çак юмаха пĕлмен çын тĕнчере çук пулĕ.

Пирĕн васкасах спектакль пуçламаллаччĕ, анчах эпир Хĕлипе тавлашса кайрăмăр. Вăл йăпăр-япăр анчăка ярса илчĕ та ăна тӳрех сценă çине кăларма пикенчĕ. Геройсене çапла тĕлли-паллисĕр кăларма юрать-и? Анра этем. Çыхăн-ха çавнашкал хăлăхсăрпа, ĕнсӳне хуçăн. Аран-аран ӳкĕте кĕчĕ. Эпĕ сылтăм алла старике тытрăм та çарăк патнелле шутаратăп. Хам калаçатăп. Сулахай алăпа — карчăкне. Ентĕ мăнукăн тухмалла. Икĕ пуканене тĕрентерсе хăваратăп та мăнукне илме чупатăп. Халĕ ĕнтĕ анчăкăн черет. Анчăк — Хĕлипре.

— Васка!— кăчăк туртатăп ăна.

Хĕлип ăнланчĕ. Анчăка старикпе карчăкăн мăнукĕ хыççĕнелле шутарма пуçланăччĕ çеç, вăл пĕр-ик хут вĕрсе те илчĕ, темрен-çке ури çакланнă, кĕрĕс-мерĕс çĕре персе анчĕ. Йытти чаршав (тĕрĕссипе илсен эпир шăналăк карнă) леш енне, ачасем курса ларакан çĕре, пат! персе анчĕ.

— Ы-ых-ых, мемме!— терĕм. Сассăм шăл витĕр сăрхăнса тухрĕ. Хĕлип манран хăраса пулас, ыратнине пăхмасăр чаршав айĕпе упаленсе тухма пикенчĕ. Эпĕ ăна çавăнтах, уринчен ярса тытса, каялла туртса илтĕм.

— Тăхăнтарса ярап пĕрре ĕнсӳнтен,— терĕм, чăнахах та аллăма çĕклесе.— Пĕтертĕн, ачасем умĕнче намăса ятăн!

— Мĕн тӳпелешен!— мăкăртатать Хĕлип.— Пур пĕрех унта пĕр ача та юлман.

— Сӳпĕлти!— кăшкăрса пăрахрăм, вăл каланине йĕп çăрти тăрăшшĕ те ĕненмесĕр.

— Куçу курать пулсан, хăв пăхсам!

Хальхинче чăнахах та Хĕлипĕн сассинче кăштах чăнлăх пурри палăрчĕ. Пур пĕрех ĕненместĕп. Ун пек пулма пултараймасть. Ачасем пукане театрĕ курма çав тери юратаççĕ-çке. Вĕсене кӳсекпе хăваласан та салатаймăн. Çапах та, шăналăка пĕр кĕтессинчен сирсе, пуçа кăларса пăхрăм. Мĕн тейĕн? Пĕр чун та юлман! Хăш вăхăтра тухса кайнă? Вĕсене хăваласа çитес пек, кĕçĕн калинкке патне тапса сикрĕм. Ахалех пулчĕ. Никам та çук, йĕрĕ те курăнмасть. Калинккине те чип-чиперех хупса, шашулккине те антарсах хăварнă. Ним калаймăн, тирпейлĕ. Ман чунра тăвăл хускалчĕ! Мĕне пĕлтерет ку? Мăшкăлланине-и?.. Çак ĕç никамăн та мар, Çуппан. Пĕтĕм ачасене вăл илĕртсе илсе тухса кайнă. Эпĕ пукане театрĕ тунăшăн вĕчĕхет.

...Кайнă. Пăрахса кайнă. Никам та юлман. Мана темле шухăш çавăрса илчĕ, чĕре шар çурăлнăнах туйăнчĕ. Çӳçенсе илтĕм. Калинкке çывăхĕнче тек тăрас килмерĕ. Эпĕ васкасах ампар умне, Хĕлип патне, тавăрăнтăм. Вăл кунтах, кайман ав, пуканесемпе аппаланать.

— Мĕн тăвăпăр?— ыйтрăм унтан. Хĕлип ним те чĕнмерĕ, айăплăн çĕрелле пăхса, пуçне айккинелле пăрчĕ.

Эпĕ шухăшлатăп: пуканесене начар вылятнăшăн тармарĕç-ши ачасем? Лайăхрах хатĕрленес. Тепле пулсан та вĕтшакăра алăран вĕçертме юрамасть.

Паян эпĕ ачасене каллех пукане театрĕ кăтартасшăн тăрмашатăп. Пуканесем хатĕр. Калаçма вĕрентĕмĕр. Çавăнпа та ĕнтĕ юпа тăрринчен хĕремесленсех кăшкăратăп:

Ачасем, театр курма васкăр!

Кăшкăрнă май юпа тăрринче тапăртатса ташласа илетĕп. Чарăнтăм. Тимлесе итлетĕп. Пĕр сас-чӳ те çук. Ăçта мурта ачасем? Мĕнле кăра çил вĕсене шăлса кайнă? Чим, кĕлет хыçĕнче кĕхлетсе ӳсĕрни илтĕнчĕ мар-и? Ăхă, чиперех илтĕнчĕ. Тĕрĕс. Ав, ав, çынни курăнчĕ. Кĕтесрен пăрăнать. Кам ку? Эх-х! Кĕтни харама кайрĕ. Мăшкăл! Ачасем мар. Кӳршĕри кинемей. Карчăк тени театр куракан çын мар ĕнтĕ. Мур илесшĕ. Тăхта-ха, тăхта... Ват çынна ача ăсĕ кĕрет, тенине илтнĕ эпĕ. Тен, вăл театр курма килет? Тен, вăл мăнукĕсене ертсе тухнă? Кăшт та вăхăт иртмĕ, пĕчĕкскерсем шăкăртаттарса та çитĕç. Асламăшĕ, вĕсенчен маларах килсе, билет туянасшăн пулĕ. Вăл, ав, саппун аркине хиврелетсе çавăрса тытнá. Тем тесен те çăмарта. Сахал-махал мар пулас, вуннăшĕ пурах. Ватă çынна сума сăвас пулать, иртсе ан кайтăр. Кăшкăрам-ха хытăрах, тен, хăлхи витĕрех мар унăн.

— Спектакль пуçланать! Билетсăр ан юлăр!

Хам каллех лапăстин-лапăстин сиккелерĕм, хурчăка çунатти евĕр алăсемпе авăсатăп.

Кинемей ман тĕле çитсен тапах чарăнчĕ. Куç харши çумне ал лаппипе тытса çӳлелле пăхкаларĕ. Мана курчĕ те шак хытса тăчĕ. Туятăп, вăл ăнланмасть пулас.

— Çăмартине кӳр,— терĕм алла тăсса.—Миçе билет парас?

Кинемей тĕлĕннипе каялла чакса тăчĕ.

— Акă билетсем туянăр!— терĕм кинемее.

— Э-эй, çырлах!— мăкăртатса илчĕ кинемей. Сассинчен уйăрса илеймерĕм: те мухтать, те ятлать. Çук, çук! Мĕншĕн ятламалла-ха?

— Ара, çулла та светке çӳрет-и?— терĕ татах кинемей.

— Светке мар, пуканесен театрĕ! Билет ил те кĕр картишне,— ăнлантартăм хайхискерне.

Килнĕ çынна алăран вĕçертес килмест. Картишĕнче хӳме шăтăкĕнчен пăхса тăракан юлташăма, хамăн помощнике, систертĕм:

— Хĕлип, питĕркĕчне шутарса, калинккене уç!

— Халех!

Хĕлип калинккене часах уçаймарĕ. Кинемей малалла кайрĕ. Сăмаххисем кăна ман хăлхама çитсе перĕнчĕç: «...хальхи ача-пăчана итлесен карта хушшине пырса хĕсĕнĕн. Илес-милес тăхăннă та юпа тăрринче çухрашать кăна...»

Эпĕ хам тумтире пăхрăм. Чăнах та илес-милес тăхăннă-ши вара эпĕ? Мĕн ăнланать вăл карчăк? Тĕттĕм çын. Çакăн чул пурăнса та вăл клоун курман. Мĕн пур сăлтавĕ те çакăнта. Эпĕ пур, ачасене ытларах илĕртес тесе, çĕр çывăрмасăр, аннен кивĕ саппунĕсемпе тутрисене пухса, артист кĕпи çĕлерĕм.

Чăтайми çиллентĕм. Тарăхнипе Хĕлипе хăтăрса пăрахрăм:

— Çитет йăраланса! Мăран! Калинккене вăхăтра уçаймастăн.

— Питĕркĕчне шутарасси юпа тăрринче авкаланса тăрасси мар,— мăкăртатрĕ Хĕлип.

— Эй, санпа муталанса пĕр пус тупас çук.

— Мĕн çав таранах тулашан, кинемей пур пĕрех сан театрна кĕрес çукчĕ.

— Пур пĕрех, пур пĕрех...—витлесе илтĕм.— Санпа ĕçлеме пуçăнсан, ачасем те килме пăрахрĕç.

Хĕлип, çак сăмахсене илтсен, шăртне тăратмаллипех тăратрĕ.

— Юл, эппин, пĕччен!— терĕ вăл хăюланса.— Пăрахатăп та каятăп, текех санăн тарçу пулас килмест.

Вăл çынни çавнашкал, каларĕ пулсан — тăвать, пăрахса каятех. Пĕччен юлсан мĕн курăп? Юрамасть Хĕлипе кӳрентерме, ямалла мар ăна. Кĕсъерен пăрça евĕр çаврашка канфетсем кăлартăм та, чăх-чĕпсене кĕрпе сапса панă пек кăт-кăт! тесе, юпа тăрринченех çĕре сапрăм. Хĕлип хапха çумне таянчĕ те вырăнтан та хускалмасть. Шăл витĕр чăрт! çеç сурчĕ. Мĕне пĕлтерет ку? Халиччен упалене-упаленех пуçтараканччĕ.

— Мĕн куштанланса тăран? Саншăн ку вир пĕрчи мар, тусăм,— канфет.

— Курман пулĕ ун пеккине. Каятăп Çуппа ушкăнне. Унта вĕсем лайăх вăйăсем выляççĕ,— терĕ те Хĕлип утма тытăнчĕ.

Ирĕксĕрех манăн кĕсъерен кĕмĕл хутпа чĕркенĕ канфет кăларма тиврĕ.

— Ме-çке!— терĕм. Хĕлип йăлт çаврăнса пăхрĕ. Эпĕ умлăхыçлă икĕ канфет ывăтрăм. Хĕлип канфетсене çĕре ӳкме памасăр, сывлăшрах яра-яра тытрĕ. Пĕлетĕп ăна: канфет çиес тесен, çунакан вутта сикет.

Эпĕ юпа тăрринчен иксе антăм. Хĕлиппе калаçас пулать. Иксĕмĕр те карта çумне, çерем çине лартăмăр.

— Ксей, пар тата икĕ канфет.

— Эсĕ мана тĕп тăван!— кăшкăрса ятăм эпĕ.

— Ан хĕрхен, пар татах икĕ канфет, хутпа чĕркенисене,— тилмĕрчĕ вăл.— Вара ачасем пухма каятăп.

Икĕ конфет шел мар. Парас марччĕ те ачасене кам пухса килĕ? Хĕлип сăмах вакласа тăмарĕ, канфет ĕме-ĕме Турикасалла уттарчĕ. Эпĕ, вăл кайсан, чылайччен лартăм. Пирĕн умран ачасем мар, çитĕннисем те иртсе çӳремеççĕ. Халăх ăçташи паян? Аса илтĕм, ара анне ирех утă çулма тухса утрĕ. Те-

мĕн, паян театр куракан пулĕ-ши? Пионерсем утă çулнă çĕре кайнă. Эппин, ман пĕчĕккисене, шкул çулне çитмен ачасене, илĕртме тивет. Ларса пулмасть-ха, хам та Анаткаса çитсе килем.

Эпĕ тӳрех Укçине инкесем патне кĕтĕм. Вĕсен икĕ ача: Плакипе Кринкка. Иккĕшĕ те шкула çӳремеççĕ. Иртнинче вĕсем ман пукане театрне питĕ юратса пăхнăччĕ. Амăшĕ те: «Тавах сана, Ксей, ачасене пухса вылятса ларнăшăн»,— тенĕччĕ. Çăмартине те хăй аллипех тыттарнăччĕ. Плакипе Кринкка паян килте çук. Картишне те, пӳртне те чӳречерен пăхрăм. Курăнмасть. Кӳршĕ кил умĕнче пĕр пĕчĕк ача пĕчченех выляса çӳрет. Кивĕ çăпата çине курăк тиенĕ те туртса пырать.

— Эй, ачи! Мĕн тăван?— чĕнтĕм хайхискерне.

— Утă туйттаятăп, феймăна, выльăхсене çитейме.

— Хă, утта çăпатапа? Култаран. Халĕ космоса ракетăсем вĕçеççĕ. Эсĕ тĕттĕм ача. Мĕн ыррине кĕтĕн санран.

Пĕчĕк ача ним те калаймарĕ.

— Тусăм,— кăчăк туртса чĕнтĕм эпĕ ăна,— пукане театрĕ курма пыратăн-и?

— Анчăк пукане-асаттене çыйтнине куйма-и?

— Ăхă. Эсĕ пĕркун курнă эппин?

— Куйнă.

— Татах курас килет-и?

— Килет.

— Апла пулсан атя.

Ача хавасланса манпа юнашар сиккелесе утма тытăнчĕ.

— Тăхта,— терĕм ачана.— Ара эсĕ билет туянма укçа илтĕн-и?

— Ай-яй. Пийĕн укçа çук.

— Эппин чăх йăвинчен пĕр çăмарта кĕрсе ил. Чăх йăви хăш тĕлтине пĕлетни?

— Пĕлеп.

— Чуп, эппин. Ас ту, никама та ан курăн, вăрттăн.

— Килте никам та çук.

Ача картишне хапха айĕнченех кĕрсе кайрĕ. Нумай кĕтмелле пулмарĕ, вăл сирпĕнсе те тухрĕ.

— Йăвая икĕ çăмайта, иккĕшне те илтĕм. Ме тыт,— терĕ вăл, çăмартисене мана парса.— Анчах ас ту, театйя кĕйт.

Пĕр çăмартине илсе эпĕ кĕсъене чикме пикеннĕччĕ çеç, таçтан муртан пĕр çын сиксе тухрĕ те кăшкăрса ячĕ:

— А-а-а, эсĕ-и-ха вăл пĕчĕк ачасене илĕртсе çăмарта пухса çӳрекен?! Тинех лекрĕн пулас!

Ман çара урасем çине чаш! вĕри шыв сапнăн туйăнчĕ. Ах, вĕтелерĕ! Унăн аллинче вĕлтрен пулнă иккен. Аран-аран вĕçерĕнсе тартăм. Ура тӳсмелле мар тĕлкĕшет. Çырма хĕррине чупса çитсенех кукленсе лартăм. Пăхатăп урана — хĕп-хĕрлĕ хĕрелнĕ ӳт çийĕн шап-шурă хăмпăлчăсем. Пулать çав тери



усал этем. Ура ыратать пулин те, вăрах ларма юрамасть. Театр курма пыракансем тупмалла. Ăçта, хăш урамра шырас? Пуçа шухăш пырса кĕчĕ: тен Хĕлип театр курма ачасем пухса пынă? Театр хуçи кунта, çырма хĕрринче, мĕскĕнленсе ларать. Тем тесен те вĕсем мана кĕтеççĕ. Ырă ĕмĕтпе çунатланса чупрăм. Киле çитрĕм. Клоун кĕпине тăхăнса хапха тăрне хăпартăм. Хĕлиппе ачасем халь-халь персе çитеççĕ пуль. Мĕн тейĕн? Чĕрем чăнах та тĕрĕссине сиснĕ. Ав, пăх, Турикасран урам тăрăх пĕр ушкăн ача анать. Стройпа, юрă юрласах утаççĕ. Ха, параппанне те тăнкăртаттараççĕ. Горнне те манман. Кунталла, кунталла килеççĕ! Ур-ра! Хĕлип, тупата, ăслă. Маттур! Мĕн чухлĕ ача пухнă вăл? Ачисем те айван çынсем мар. Пĕркун Çуппа шуйлантарса янă вĕсене. Пĕлетĕп, кирек кам та театра кăмăллать.

Çывхараççĕ. Лайăхрах илĕртес. Театра çитнине туйччăр.

— Театр курма васкăр! Билечĕ йӳнĕ!

Чăн-чăн артист тейĕн çав хама. Сассăм мĕнлерех уçă. Ак япала. Колоннă умĕнче — Çуппа! Эппин вăл театр уссине ăнланнă. Иртнинче ачасене хăй илсе тухса кайнă, халĕ хăй илсе килет. Ырă кун паян. Пултаракан хĕрача. Паттăр пулнишĕн пурте юратаççĕ ăна. Хам та хаклатăп. Епле пĕр харăс уттарать вăл шĕпĕлккесене.

Юпа тăрринчен хыпалансах анмастăп-ха. Кассă умĕнче пĕр вăхăт кĕшĕлтетсе тăччăр. Эпĕ трибунă çинче мăнаçлăн тăратăп. Сăмахсене алăпа сулса калатăп. Ак тамаша! Мĕн хăтланаççĕ? Е вĕсем ман сасса илтмеççĕ? Иртсе каяççĕ.

— Тăхтăр! Çĕнĕ спектакль! Билечĕ йӳнĕ — пилĕк пус! Укçа пулмасан, пĕр çăмарта!

Вĕсем чарăнма шутламаççĕ те. Иçмасса, пĕр ачи те пулин ман енне çаврăнса пăхмасть. Мĕне пĕлтерет ку? Ăçта каяççĕ вĕсем? Колоннă хыçĕнче пĕччен çапкаланса пыраканĕ кам? Э-э, ара ку Хĕлип-иç. Кур-ха эсĕ ăна, юриех пулас, урине еплерех çĕклесе утма тытăнчĕ. Ай-ай, пуçне каçăртрĕ. Хăйне кам вырăнне хурать-ши? Мемме. Çуппана курнă та, эпĕ те кирлĕ мар. Ман енне пĕр хут куç çĕклинччĕ, юпа тăрринче çапах та эпĕ-çке. Юрĕ. Куншăн ăна нихçан та каçармăп.

Иртсе кайрĕç. Шалт тĕлĕнетĕп. Ăçта кайрĕç-ха вĕсем? Ман чĕре сисет. Тем тесен те Çуппа пукане театрĕ уçнă. Хĕлипе, ман патăмра ĕçе вĕреннĕскере, хăйĕн помощникне илнĕ. Тепĕр тесен хĕрачана укçа пухни килĕшмест те.

Татах юпа тăрринче тăманалла пăхса ларсан, мана шуç чуманпа шутарĕç. Вĕсен хыçĕнчен каяс. Ан та кĕтчĕр, ан та шанччăр, вĕсен театрне укçа парса кĕместĕпех. Кĕрсен те хăйсене тулласа пăрахăп, пуканисене пăсса, ватса пĕтерĕп. Çак шухăшпа юпа тăрринчен анса ачасем хыççăн утрăм. Вĕсене юриех хуса çитместĕп, пыратăп курăннă-курăнман. Çывхарсан тӳрех Çуппа куçĕ тĕлне пулăп, çитет вара ăна шăл йĕрме:

«Ахă, эсĕ хăвах ман вăлтана лекрĕн»,— тейĕ. Эпĕ ирĕклĕ çын, çын ташшине ташлакан ача мар. Уйрăмах хĕрачасен сиккипе сикессĕм çук.

Çуппасен килĕ курăнать. Пĕлсех тăратăп, манран курса, хапха çумне кассă тунă пулĕ-ха. «Кунта пукане театрĕ ĕçлет» тесе çырса çапнă ĕнтĕ.

Çывхарчĕç Çуппасен килĕ тĕлне. Анчах мĕн мурĕ? Мана тарăхтарасшăн çапла хăтланать-и? Кур-ха эсĕ ăна, ачасене килне илсе кĕмерĕ. Ăçта ертсе каять-ши? Хĕрача темерĕн. Пĕлес килнипе чунăм тӳсме çук вĕчĕрхенме тытăнчĕ. Халĕ хама хуть çурмаран касса пăрахчăр, эп вĕсенчен юлмастăпах. Тăкăрлăка кĕчĕç. Ай-ай, кунта мĕн туса хунă? Мĕнле илемлĕ! Чечексем куçа илĕртеççĕ. Миçе клумбă, йăран! Чаплă аллейă. Варринче такăр сукмак. Саксем те лартса тухнă. Сукмакăн икĕ айккине шурă, хĕрлĕ кирпĕч татăкĕсемпе тĕрлесе капăрлатнă. Йĕркипех пĕчĕк йывăççем. Сукмакĕ ăçта çити тăсăлать, сада кĕмелли алăк патне пырать. Ял ачисен сачĕ вăл. Парне. Як Никич полковник-пенсионер хĕрĕ патне кайнă та каялла таврăнман. Хăйĕн садне ял ачисене парнеленĕ. Сачĕ çамрăк, илемлĕ тесе калаçнине илтсеччĕ эпĕ пысăккисенчен.

Çуркунне Çуппа пахчана ĕçлеме хăваласа ман тинкене илнĕччĕ. Эпĕ пур пĕрех пăрăнса юлма пĕлеттĕм. Сăлтав çине сăлтав тупса тăраттăм. Юлашкинчен чĕнме те пăрахрĕç. Çапла пĕр хутчен те килмен. Сад пахчине курман-и эпĕ? Хамăрăн та пахча тулли пан улми. Ĕçсĕр ларман. Пĕччен пукане театрĕ уç-ха. Пайтах вăй хумалла: пуканесем тумалла, кĕписене çĕлесе тăхăнтармалла, юмахне тупса сăмаххисене вĕренмелле, тата ытти те.

Ачасем Çуппана итлетчĕç. Темле плансем тăватчĕç, тавлашатчĕç, кулатчĕç, вара уроксем пĕтсен ушкăнпа тухса каятчĕç. Каникула ярсан пĕринпе те хирĕç тăрса калаçман. Ку таврана килсс те пăхман. Ав мĕскер тунă вĕсем!

Стройпа килекенсене аллейă пуçланнă çĕрте, çул хĕрринче, тăракан икĕ ача салют парса кĕтсе илчĕç. Хуралта-и вĕсем? Çуппа рапорт парать вĕсене. Эпĕ аякра, йăмра хыçĕнче, вăрттăн пытанса тăнипе рапорт сăмахĕсене уçăмлăн илтейместĕп. Темле кинемейĕнне пахчинчи çĕр улмине çумран тасатнă, терĕ пулас.

Тăкăрлăк леш енчен стройпа тепĕр ушкăн çитрĕ. Колоннă пуçĕнчи хĕрлĕ галстуклă арçын ача хуралта тăракансене каллех салют парса рапортларĕ. Эль шывĕн çыранĕнчи утта таврса пĕтерни çинчен пĕлтерчĕ.

Çав ачасене пăхса тăнă май курман та, ман умранах хамăрăн улттăмĕш класра вĕренекен Плаки иртет. Вăл та пĕччен мар. Пĕчĕккисене, шкул çулне çитмен ачасене, мăшăррăн çавтăнтарнă та хăй хыççăн ертсе пырать. Кашнин аллинче чечек çыхxи. Плаки те çав шăкăр-макăрсене хуралта тăракансем

умĕнче чарса тăратрĕ, рапорт пачĕ. Вăл пĕчĕккисемпе пĕрле улăхра уçăлса çӳренĕ иккен. Пурте ырă-сывă.

Ытла та тĕлĕнмелле кунта. Малалла мĕн тăваççĕ-ши? Ушкăнăн-ушкăнăн килнĕ ачасем аллейă айккинчи уçă вырăна, ешĕл çерем çине тухрĕç.

— Тăрăр вăйă картине!— илтĕнчĕ уçă сасă. Тӳрех палларăм. Кăна Çуппа каларĕ. Хаваслăскерсем, кайăк чĕпписем евĕр чĕвĕлтетеççĕ. Тăрса тухрĕç. Чăн-чăн çавра кăшăл. Вăйă карти хускалнă май, юрă пуçланчĕ. Юрлаççĕ, эх юрлаççĕ. Чарăнчĕç. Ташлаççĕ, сăвă калаççĕ. Пĕчĕккисем — шĕпшĕлтĕксем те сăвă пĕлеççĕ. Юрататъ ку вак-тĕвек халăх вăйă выляма. Унччен те пулмарĕ горн сасси сывлăша çурса ячĕ: ту-ту-ту! Унталла-кунталла пăхкалатăп. Куртăм. Сада кĕмелли алăк умĕнче пĕр пионер курăнса кайрĕ. Горнне çӳлелле çĕкленĕ, вăй вылять. Ахăртнех, вăл вылякан ачасене йыхăрать пулас, унсăрăн лешсем шуйланмăччĕç. Вăйă карти пĕр тĕлтен пăт татăлчĕ. Пăхсан, кĕркунне кăнтăралла вĕçекен кайăк хур картине аса илтерет. Чи малта каллех — Çуппа.

«Хур» карти алăк умне çитрĕ. Çуппа горнистпа юнашар тăчĕ. Ачисем вара пĕрин хыççăн тепри сада кĕре-кĕре каяççĕ. Эпĕ пытанса тăнă йăмра хыçĕнчен тухрăм. Аллейă патне самаях çывхарса тăтăм. Алăк умĕнчи ачасем питĕ лайăхах курăнаççĕ. Рет кĕскелнĕçемĕн кĕскелет. Хыçалта каллех Хĕлип. Вăл мана асăрханă пулас, пуçĕпе сĕлтет. Алăк умĕнче Хĕлипе чарса тем калаçрĕç. Пахчана кĕрес умĕн Хĕлип мана вăрттăн кăчăк туртрĕ. Вăл илĕртмесĕрех ахаль те чун кăсăкланса тăратчĕ. Мĕн пур-ши вĕсен садĕнче? Мĕн тăваççĕ-ши вĕсем унта? Шутсăр пĕлес килет. Пĕр-иккĕ сиксех алăк умне çитсе тăтăм. Анчах та Çуппапа горнист пахча алăкне хупма ĕлкĕрчĕç.

— Мана та кĕртĕр!— терĕм эпĕ, алăка шаккаса.

Çуппа садран ман пата каялла тухрĕ. Вăл, алăк тăррине кăтартса, вулама сĕнчĕ. Унта хĕрлĕ хăмач çине çапла çырса хунă: «Эсĕ коммунизма кĕме тивĕçлĕ-и?»

Эпĕ ним калама та пĕлмерĕм.

— Вуларăн-и?— ыйтрĕ хĕрача.

— Вара мĕн?— терĕм ăна.

— Вуларăн пулсан, ответне илтесшĕн,— терĕ Çуппа.

Пахчара тăракан ачасенчен тахăшĕ кăшкăрса ячĕ.

— Вăл коммунизма кĕме тивĕçлĕ мар!

— Мĕншĕн тивĕçлĕ мар? Ытла нумай пĕлетĕн-çке!— чăркăшма тытăнтăм эпĕ.

— Чăннипех те çаплах!— терĕ çав ачах. Пурте ахăлтатса кулса ячĕç.

— Мĕншĕн апла? Мĕне пĕлтерет ку?— ыйтрăм тарăхса.

— Пукане театрĕ кăтартнăшăн укçа илетĕн!

— Кашниншĕн пилĕк пус ыйтатăн!

— Укçа пулмасан — çăмарта! Сăхă ача эс!

Ман пит пĕçерсе кайрĕ.

— Ачасенчен пĕçертнĕ укçапа мĕн тăвăн-ха эсĕ, Ксей? Эпĕ чĕнместĕп.

Ачасем кулаççĕ:

— Хăйма çиме вĕреннĕ кушак вăл, пылака вĕреннĕ.

— Чĕчĕ пăрушĕ вăл, кунĕн-çĕрĕн канфет ĕмет!

Çук, текех вĕсем питленине тӳссе тăма хал çитерейместĕп, палт çаврăнтăм та чупрăм. Пахчари ачасем темшĕн шавласа юлчĕç. Çав шав хушшинче эпĕ хама ятран: «Ксей! Ксей!» тесе чĕннине аванах илтрĕм. Урăх никам та мар, Çуппа чĕнчĕ. Унăн сасси. Анчах ниепле те тавçăрса илейместĕп: шеллерĕши е пахчана выляма кĕртесшĕнччĕ-ши?

Киле çитсен ампар умĕнче шăналăк хыçне кĕрсе лартăм. Ещĕкре пуканесем выртаççĕ. Ав, старикпе карчăк, вĕсен мăнукĕ, йытă, шăши. Вĕсем темшĕн ман çине йĕрĕнсе те тарăхса пăхнăн туйăнаççĕ. Мĕнле ăнланмалла пурнăçа? Эх, таçтан пуçа пырса кĕнĕ укçа тупас шухăш... Ас тăватăп-ха, кӳршĕ ял — Çĕнкас ачисем хĕлле пирĕн шкула пукане театрĕ килсе кăтартнăччĕ. Вĕсем пĕр ачаран пĕр пус укça илмерĕç вĕт. Куракансем мĕнле кăмăллă юлнăччĕ. Эпĕ вара? Пилĕк пус е пĕр çăмарта илнĕ. Тьфу! Ах, ăш çунать-çке, чун ыратать. Мĕн тăвас? Чун асапĕн пĕтĕм сăлтавĕ те пуканесенче тейĕн. Пукане ещĕкне çĕклерĕм. Пĕтĕмпех çырмана кайса тăкам.

Çак вăхăтра хапха уçăлчĕ те картишне кӳршĕ хĕрĕ, комсомол организацийĕн секретарĕ Униççе кĕчĕ. Мана курчĕ те хавассăн калаçма пуçларĕ.

— Ксей, эсĕ полковникăн садне каймăн-ши, ачасене пукане театрĕ кăтартма— ыйтрĕ вăл.— Часах эпĕ те пыратăп.

— Мĕн?—терĕм тĕлĕннипе. Кассăн-кассăн вĕрекен ăшă çил пуçа уçăлтарнă пекех пулчĕ. Кăшкăрса ятăм: — Каятăп! Эпĕ ачасене укçасăр пукане театрĕ кăтартма каятăп!





## ӐСНЕ ЧУХ

Повеç

### I

Яла илсе çитерекен кукăр-макăр сукмак, чукун çул хĕрринчен пуçланнăскер, уй-уй тăрăх, çырма-çатра урлă каçса вĕтлĕх ката пуçĕпе иртет. Çурхи каскăн çил вĕрнипе, пĕлтĕрхи типсе хытнă çулçăсем кăштăртатса илеççĕ. Катаран пĕр çын тухрĕ. Çап-çамрăк йĕкĕт. Çийĕнче унăн чукун çул çинче ĕçлекенсен тумĕ. Ним те хурласа каламалли тупаймăн, илемлĕ çын: яштака пӳ-си, çаврака пит-куç. Ку этем хăйне ытла та пăлхануллă тыткалать, унталла-кунталла шиклĕн пăхкалать. Темрен сехĕрленчĕ-и? Вăрмана вĕлт! кĕрсе çухалчĕ. Çук, аякка каймарĕ вăл, пĕр тунката хыçне кукленсе ларчĕ. Мĕне пĕлтерет-ха ку йĕкĕт çапла хăтланни? Камран хăрать?

Паçăрхиллех кассăн-кассăн çил вĕрет. Çырма енчен ян та ян юрă илтĕнме тытăнчĕ. Унта шкул ачисем стройпах пыраç-

çĕ-мĕн. Кашниннех хул пуççи çинче тимĕр кĕреçе, мăйра хĕрлĕ галстук. Малти ретре пĕр ачи купăс калать.

Колоннă пуçĕнче — çурта пек яштака хĕр. Çийĕнче — пиçихиллĕ кĕске пальто. Çӳхе, чечеклĕ тутăрне майралла çавăрса çыхнă. Уринче — атă.

Çывхарнăçемĕн çывхараççĕ ката пуçне пионерсем.

Тĕлĕнмелле. Çак ачасенчен хăрарĕ-ши вара тунката хыçне пытаннă çын? Юрĕ. Вăхăт иртĕ, пурте паллă пулĕ.

— Отряд, стой! — янраса кайрĕ уçă сасă.

Ку командăна малта пыракан хĕр пачĕ. Сасси унăн чăнах та çирĕп, уçăмлă. Татах темле командăсем илтĕнчĕç. Ачасем çакна çеç кĕтнĕ тейĕн, самант строй пăсăлчĕ, шăв-шав çĕкленчĕ. Унччен те пулмарĕ, аслă юлташне сырса илчĕç. Тĕк тăма пĕлеççĕ-и шереметсем. Тĕрткелешеççĕ, пурте хĕр çывăхнерех пулма тăрăшаççĕ. Мĕнле япала вĕсен кăмăлне пит хускатнă? Çине-çинех ыйтаççĕ, тĕпчеççĕ:

— Тина, каласа парăр, тархасшăн?

— Эсир хăвăр çинчен пĕлтерме пултăр-çке. Сирĕн бригадăна халĕ коммунизмла ĕçлекен бригадă ятне панă.

— Сирĕн бригадă чăн-чăн коммунизм вăхăтĕнчи пек ĕçлет-и?

— Тина, пирĕн питĕ, питĕ пĕлес килет.

Кĕçĕн юлташĕсем çапла тĕпчени ăна савăнтарать, вăл алли çитнĕ таран ачасене ыталаса илет те ахăлтатсах кулать.

— Ну-и çынсем те эсир. Вăхăт çитĕ, пурин çинчен те каласăпăр, — тет Тина. — Тупата, эсир стройра та ĕçре çеç хăвăра йĕркеллĕ тытма пĕлетĕр, ирĕкре вара чĕвĕл-чĕвĕл çерçисем. Шăпланăр-ха, шăпланăр, тусăмсем. Ытлашши шавлани килĕшмест. Тепĕр темиçе çултан хамăр вăрмана мăйăр татма, çырла пухма çӳрĕпĕр.

Тина ачасене çерем çине ларса канма сĕнет.

— Эсир ывăннă, — тет йăвашшăн. — Мĕн чухлĕ йывăç лартрăмăр. Малалла çыран ишĕлмĕ. Ун тăрăх вăрман кашласа ӳсĕ.

Тина бригадăри юлташĕсем ĕçре те, пурнăçра та, вĕренӳре те мĕн пек туслă, пуçаруллă пулни çинчен тĕплĕн те ĕнентерӳллĕн калама тытăнать. Ун кашни сăмахне ытарайми тăнлаççĕ ачасем, кашни хусканăвне сăнаççĕ.

— Пирĕн вăл бригадăна практикăна каясчĕ, — терĕ юлашкинчен Урине, ăна тимлĕн итлесе лараканскер.

— Калама çăмăл. Илеççĕ-и-ха вĕсем пире?

— Илмеççĕ! — пат татса каларĕ Сяпук.

— Мĕншĕн? Ой! — кулянса ӳкрĕ Урине.

— Малта пыракан бригадă вĕренӳре малта пыракан класа çеç йышăнать.

— Шел, пĕтĕм отряда Актай пăсать, — терĕ тахăшĕ ассăн сывласа. — Унăн «иккĕ» паллăсем темиçе те. Вĕренӳре çеç мар,

ĕçре те кая юлать. Паян та ав хăйне уйăрса панă ĕçе çынпа шай туса пĕтереймерĕ.

— Çапах та пулăшмаллаччĕ ăна,— сăмах хушрĕ Венюк.

Темĕн чухлех калаçрĕç ачасем. Юлашкинчен çапла йышăнчĕç: класра вĕренӳре юлса пыракан, дисциплинăна пăсакан ача пулмалла мар, коммунизмла ĕçлекен бригадăна практикăна кайма тивĕçлĕ пулар.

— Юрĕ,— килĕшрĕ Тина.— Бригадăра сирĕн пирки калаçатăп.

Ачасем шавла-шавла малалла кайрĕç.

Ката пуçĕнче каллех пуш-пушă.

Кăшт тăхтасан тунката хыçĕнче пытанса ачасен калаçăвне вăрттăн итлесе выртнă çын тухрĕ. Пирус чĕрткеленĕ май курах кайрĕ: сукмакпа пĕр ача утать. Пилĕкри пиçиххи хушшине кĕнеке хĕстернĕ. Аллинче — кĕреçе. Çын тӳрех ача çулне пӳлчĕ те:

— Эй, ачамкка, эпĕ сана паллатăп,— терĕ.— Эсĕ — Актай.

Ача тĕлĕнсе пăхрĕ. Унтан сăмах хушрĕ:

— Ăçтан пĕлен эсĕ ман ята?

— Эпĕ пурне те пĕлетĕп, тусăм, пурне те витĕр куратăп. Сана çырмара пĕччен йывăç лартма хăварнă. Тата тантăшусем сана мĕншĕн килĕштерсех кайманнине те пĕлетĕп.

— Мĕн пĕлмелли пур унта. Начартарах вĕреннĕшĕн ятлаççĕ,— терĕ Актай. Сасси ун шăппăн тухрĕ. Куçран пăхма та хăяймарĕ, хĕрелчĕ.

— Çапла çеç-ши?— терĕ те çын кулса ячĕ. Вара тăрăхланă сасăпа ыйтрĕ:

— Кала-ха, пиччӳ ăçта сан?

— Пичче-и? Пичче вăл мĕн... мĕн...,— текелерĕ Актай.

— «Мĕн... мĕн...» тесе мăкăртатса тăран тата,— йĕкĕлтесе илчĕ лешĕ.— Именетĕн пулсан, хам калам: пиччӳ сан — тĕрмере.

Актай çак сăмахсене илтсен çӳçенсе илчĕ, аллисене чăмăртарĕ. Тӳрленмен суран çине тăвар сапнăнах туйрĕ.

Пиччĕшĕ тĕрмере ларнăшăн Актай шкулта та, ял-йышра та пайтах ят илтнĕ. «Ан выльăр унпа, усала вĕренетĕр»,— тесе асăрхаттараççĕ хăйсен ачисене аппĕ-амăшĕ. Çавна пулах Актайăн çывăх юлташ та çук. Юлташсăр çын вăл тымарсăр йывăç, кирек мĕнле çил те йăвантарма пултарать. Кирек мĕн илтсен те Актай тӳсет, нумайĕшне ĕненмест. Тепле халап çӳресен те вăл пиччĕшне, Ваçике, юрататъ, ăна таса чĕрере тытса усрать.

Пичче! Ăçтан савмăн ăна. Вăл чи çывăх тăван, санран çулпа аслă çын. Тем тесен те вăл юман евĕрлĕ кĕрнеклĕ пулмалла, улăп пек вăйлă, йăрăс пӳллĕ çамрăк. Унăн сарлака çурăмĕ хыçĕнче е унпа юнашар мăнаçлăн утса пыр. Пичче хӳттинче сана никам пӳрнепе тĕкĕнмĕ, сăмах каласа питлеме

хăяймĕ. Пичче! Унăн çирĕп алли уй-хир тăрăх трактор çӳретет е хир карапĕн штурвалне тытса пырать. Пичче пĕлекен ĕç сахал-и? Мĕнле пиччĕшĕ тата хăйпе пĕрле шăллĕне илсе çӳремĕ. Çавăнпа та Актай пиччĕшĕ чипер çын пуласса, вăл киле ыррăн таврăнасса чунтан кĕтет, ĕненет. Ăс кĕрет, таврăнать, çын пулать тесе, асламăшĕ те пĕр хут çеç каламан.

— Эсĕ ман пиччене ан тĕкĕн!— пăрăнса утма пикенчĕ Актай.

— Юрĕ-çке, мĕн питĕ хĕрӳленетĕн! Тĕкĕнмелле мар-тăк, тĕкĕнместĕп,— текелерĕ йĕкĕт, Актая тытса чарса. Ваштах ăна çывăхри тунката çине лартрĕ.

— Ах, чутах манса кайман,— терĕ, кĕсйисене хыпашлакаласа тухса,— ара сана пиччӳ çыру парса янăччĕ вĕт.

— Мана? Пичче çыру парса янă?— тĕлĕнсе ыйтрĕ Актай.

— Сана çав.

Актай савăнса кайрĕ. Хăй те сисмерĕ пулас, ура çине тăрса сиккелесе илчĕ:

— Урра! Пичче çыру янă! Хăçан киле таврăнать вăл? Çав тери курас килет ăна. Мĕнле-ши вăл ман пичче? Эпĕ ăна çав тери юрататăп.

Темĕн чул шырасан та çыру тупăнмарĕ. Вăл Актая илĕртӳллĕн кăчăк туртрĕ те хăлхинчен пăшăлтатса каларĕ: паян каç пулас умĕн Хурăнвар пуçне çыру илме пыратăн. Пиччӳ çинчен каласа кăтартăп.

— Эсĕ ман пиччене курнă-и?

— Мĕнле калас сана.., Пулкаланă.

Йĕкĕт çăварĕнчен табак тĕтĕмне ункăн-ункăн кăларчĕ.

Актай кайма тăчĕ, лешĕ каллех чарчĕ:

— Кала-ха, сирĕн çав Тина текенни кам вăл?

— Тина-и? Вăл пирĕн улттăмĕш класри пионер отрячĕн вожатăйĕ. Вăл хăй колхозницă, выльăх-чĕрлĕх ферминче ĕнесем пăхать, коммунизмла ĕçлекен бригадă членĕ.

Лешĕ ним те каламарĕ, пуçне çеç сĕлте-сĕлте илчĕ.

Актай Тина çинчен каланăçемĕн пачах улшăнчĕ. Хăйне вăл темле хаваслă туйрĕ.

— Чим-ха,— терĕ вăл,— эсĕ ху кам пулатăн-ха? Пурне те пĕлетĕн, эпĕ вара сана палламастăп.

Çын хăй тăрăх пăхса илчĕ, çуха çинчи паллăсене тĕллекелесе кăтартрĕ.

— Э-э, тавçăртăм,— терĕ Актай.— Эсĕ чукун çул çинче ĕçлетĕн. Ав, паллисем. Çапла-и?

— Куçу çивĕч сан. Ăслă ача,— терĕ лешĕ.— Юлташсем мана Апуç тесе чĕнеççĕ. Эсĕ те çаплах чĕнме пултаратăн.

Апуç ачана алă пачĕ. Сыв пуллашаççĕ. Актай паçăрхилле мĕскĕн мар. Малалла хаваслăн сиккелесе кайрĕ. Унтан çаврăнса тăчĕ те кăшкăрчĕ:

— Çыру илме тепле пулсан та пыратăпах! Ас ту, калаçса татăлнă çĕрте пул вара!

— Кĕтетĕп, кĕтетĕп! — илтĕнчĕ сасă.

Апуç текенскер вара куç илмесĕр ăна пăхса тăрса юлчĕ. Тăчĕ-тăчĕ вăл тĕлĕрсе, унтан хăйпе хăй калаçма тытăнчĕ: «Шăллăм те вара сана. Палламарĕ пиччĕшне. Чăнах та, ăçтан паллатăр-ха вăл мана? Пĕрле пурăннă чух вăл пачах пĕчĕккĕччĕ.Ултă çул иртрĕ ĕнтĕ эпĕ ялтан кайни. Аван. Çан-çурăмĕ сарлака, кĕрнеклĕ ӳсет. Çакăн пеккисем кирлĕ те пире. Васкасах темиçе ача пухас та çу кунĕсене иртерме пысăк хуланалла тапас. «Хуçа» савăнать те вара».

## 2

Çăл патĕнчен хăпаракан сукмакпа лаштра йăмра патнелле пĕр ача утать. Кам ку? Аякран палласа те илейместĕн. Çывхарать. Э-э, ара Актай-çке. Мĕншĕн кунта вăл? Хăй савăнăçлă, кĕсйинчен темле хут кăлара-кăлара пăхать. Мĕн вулать-ши? Тăхта-тăхта, Апуç текен çын пама пулнă çыру мар-и? «Текех пиччӳ пек хулиган пулас тетĕн-и тесе тарăхтармĕç. Пичче таврăнать», — пăшăлтатать вăл.

Çырма енчен çурăм хыçне купăс çакнă Венюк килет. Ăна курсан Актай çырăвне пилĕкри пиçиххи хушшинчи кĕнеке ăшне хучĕ те, йăмра тăррине улăхса, пысăк турат çине ларчĕ.

— Кук-кук! Эпĕ ăçта? Мана туп, Венюк!

— Кам ара ку? — йăмра тăрринелле пăхрĕ Венюк. Тинех Актая курчĕ. — Эсĕ-çке.

— Вăйăç! — кăшкăрчĕ Актай, йăмра тăрринчен ансан. — Пĕлме юрать-и, кама ташлаттарасшăн вара эсĕ хут купăспа?

— Пĕтĕм отряд коммунизмла ĕçлекен выльăх-чĕрлĕх бригадине концертпа кайма хатĕрленет. Бригадă членĕсем кĕтеççĕ. Хора эсĕ те юрлама пыратăн пулĕ?

— Тупнă йĕпе сăмсасемпе пĕрле çухрашса тăма, — терĕ Актай, шăл витĕр чăрк! сурса. — Мана кирлĕрех ĕçсем кĕтеççĕ. Уроксем хыççăн хănана каятăп.

— Хăнана? — тĕлĕнчĕ Венюк. — Кам питех кĕтет пулĕ сана?

Актай мухтанать. Ăна чукун çул çинче ĕçлекенсем хăнана чĕнеççĕ иккен. Унти йĕкĕтсене вăл ăмăрт кайăкпа танлаштарать.

— Атя табак туртар.

Венюк нимле мар пулса кайрĕ. Ку тарана çитсе те ăна никам та чĕлĕм туртма сĕнмен.

— Мĕн тăмсай пек тăратăн? Пирус ĕмме пĕлетĕн-и эсĕ, — ыйтрĕ Актай.

— Вĕренмен-ха. Пирус илме укçа та çук.

— Ме, хам парам.

— Укҫа-и?

— Ытла-а! Пирус парап.

Актай кӗсйинчен пӗр пачкӑ пирус туртса кӑларать. Венюкӑн куҫӗ-пуҫӗ чарӑлсах кайрӗ. Лешӗ каллех чукун ҫул ҫинче ӗҫлекен йӗкӗтсемпе мухтанать, пирусне те вӗсемех панӑ.

Венюк купӑсне, сумкине хывса хурать. Вара иккӗшӗ те йӑмра ҫумне пырса, кукленсе ларчӗҫ. Ҫӑварӗсене пирус хыпрӗҫ. Актай малтан хӑй пирусне, унтан Венюк пирусне тивертрӗ. Пӗрер хут ӗмсе ҫӑвар тулли тӗтӗм кӑларчӗҫ. Анчах та Венюк ҫавӑнтах чыхӑнса кайса ӳсӗрме пуҫлать. Актая кулӑшла, ахӑлтатать. Сӑмахпа тантӑшне тӑрӑхласа илме те манмасть:

— Ҫемҫеккей!— тет вӑл.

Венюк пирусне ҫӑварӗнчен сурса кӑларчӗ: «Тьфу! Ирсӗр япала!»

— Чипертерех эсӗ,— асӑрхаттарчӗ Актай,— мӗн тухатмӑш карчӑкла вӗрсе-сурса тӑран!

— Ара, ҫӑвара армути хыпса чӑмланӑнах, йӳҫӗ те...

Актай та пирусне сӳнтерчӗ. Паллах, ӑна та табак тӗтӗмӗ килӗшмест, анчах вӑл ҫакна кӑтартмасть ҫеҫ, тантӑшӗ умӗнче хӑйне патвар тытасшӑн. Актай Венюк пӑрахнӑ пируса илсе, пачкӑ ӑшне чиксе хунӑ май сиввӗн питлерӗ ӑна:

— Эппин, эсӗ чӑн-чӑн арҫын мар-ха.

— Арҫынни арҫынах та-ха,— тавӑрчӗ Венюк, тӳрре тухасшӑн аллине сӑтӑркаласа.

— Венюк, эсӗ укҫа ҫук терӗн-и?— ыйтрӗ Актай сасартӑк.

— Укҫа чул айӗнче выртать, тет, ҫав.

— Чулне ҫӗклеме май тупмалла.

— Эсӗ вӗрентесшӗн мар-и тата?— кулса ыйтрӗ Венюк.— Темшӗн ҫав чула ху ҫӗклеместӗн?

— Ан кул,— хыттӑн каларӗ Актай,— эпӗ сана чӑнласах.

— Эппин вӗрент, вӗрент!

Актай йӑмра ҫумне пырса таянчӗ, Венюка та ҫывӑхарах пыма хушрӗ. Лешӗ йӑлӑнтармарӗ. Вара мӑнаҫлӑн калаҫма тытӑнчӗ:

— Эпир район центрӗнче пурӑнатпӑр-и?

— Ҫапла, тӗйӗпӗр.

— Пирӗн ял ҫумӗпе чукун ҫул иртсе каять-и?

— Каять, тейӗпӗр.

— Ну вӑт. Чукун ҫул ҫинче ӗҫлекенсем эх! укҫаллӑ. Пыр эсӗ вӗсен ушкӑнне.

— Мӗн тума?— ӑнланасшӑн ыйтрӗ Венюк.— Чукун ҫул ҫине ӗҫлеме илес ҫук мана, ҫамрӑк.

— Ӗҫлеме ухмах та пӗлет. Ҫавна та тавҫӑрса илейместӗн, мӑкла тына. Мӗн тума? Купӑс калама. Ахальтен-и сан купӑс пур. Вӗсем мана шӑпах купӑсҫӑ тупма хушрӗҫ. Акӑ эсӗ — купӑсҫӑ. Ташӑ кӗвви калама пӗлетӗн-и?

— Пӗлетӗп-ҫке,— терӗ.

Венюк çавăнтах купăсне ярса илчĕ те тăсса ячĕ.

Маттур вăйăç Венюк. Купăса аванах калать. Музыкă Актая та тыткăнларĕ, ташлама тытăнчĕ: йăлт-йăлт çаврăнкалать, тăпăртаткаласа илет.

Çырма урлă каçса сукмакпа пĕр çын хăпарать. Ачасем ăна пĕри те курмаççĕ, çаплах айкашма пăрахмаççĕ. Мĕнле этем-ха ку? Пуçне шлепке тăхăннă, çиййĕнче хура тум, портфель хĕстернĕ. Пăхма вăтам çулхискер. Лапсăркка йăмра айĕнче икĕ ачана курсан:

— Мĕн хăтланатăр эсир? — терĕ.

Ачасем çаврăнса пăхрĕç те хăйсене арифметикăпа вĕрентекен Герман Андреевич учителе курчĕç. Иккĕшĕ те харăс ăна сывлăх сунчĕç.

— Мĕнле концерт ку сирĕн?

— Репетици, — хăюллăн каларĕ Актай. — Тина Петровна ĕçлекен бригадăна концертпа кайма хатĕрленетпĕр.

— Эсĕ, Актай, ытлашши ашкăнма тытăнтăн. Паян та киле парса янă задачăна шутламарăн пулĕ-ха. Каллех «иккĕ» паллă илетĕн. Ас ту, куçмасăр юлатăн.

Ним те чĕнмерĕç. Учитель иртсе кайсан, Венюк тин сăмах хушрĕ:

— Актай, эсĕ мĕншĕн концерта хатĕрленмен çĕртенех учителе суйрăн?

— Сана мĕн ĕç...

Пĕр хушă нихăшĕ те сас кăлармарĕ.

— Эпĕ те задачă шутламан, — ассăн сывласа илчĕ Венюк.

— Ан кулян, — асăрхаттарчĕ Актай. — Задачă шутланă тетрадь халех пирĕн ума килсе выртĕ.

ВЕНЮК. Эсĕ, Актай, ăрăмăç мар пулĕ те?

АКТАЙ. Пăх, çырманалла, ав, «задачă тетрачĕ» йăпăртатса килет.

Çак вăхăтра Урине çырмаран хăпарчĕ. Аллинче унăн шкул сумки. Вăл йăмра çывăхĕнче сап-сарă чĕлтĕрти чечек курчĕ.

— Ой! — тӳсеймерĕ вăл хăйĕн юратнă сăмахне калаймасăр. — Мĕнле илемлĕ сар чечек!

Чечеке татас шутпа тин çеç пĕшкĕннĕччĕ хĕрача, сасартăк ши-ши! шăхăртнине илтрĕ. Унччен те пулмарĕ, ун умне Актайпа Венюк йăмра хыçĕнчен сиксе тухрĕç.

— Аха, лекрĕн-и? — кăшкăрчĕ Актай. — Венюк, ярса тыт ăна!

— Мĕн кирлĕ сире? Е эсир иксĕр те тилпĕрен вăрри çисе ухмаха ернĕ-им? — тĕлĕнсе ыйтрĕ Урине.

— Нумай ан пакăлтат. Задачă çырса илме халех тетрадьне пар, — хăмсарчĕ Актай.

— Ай-ай, чеескерсем? Тем тусан та памастăп. Мĕншĕн хăвăр шутламастăр? Герман Андреевич куншăн хытă ятлать сире.

— Ах, хирĕҫлесе тăратăн-и? Апла пулсан, ирĕксĕр туртса илетпĕр. Венюк, ҫирĕпрех ярса тыт-ха аллинчен!

Венюк чăнах та Уринен икĕ аллине те хыҫалалла ҫавăрса тытрĕ. Хĕрача тӳсĕмлĕ: кăшкăрмасть те, турткалашмасть те. Малалла мĕн пуласса шăла ҫыртса кĕтсе тăрать. Актайĕ Уринен шкул сумкине илет те кĕнекесемпе тетрадьсене туртса кăларать.

— Акă вăл пире кирлĕ арифметикă тетрачĕ!— кăшкăрса ярать Актай.— Халĕ ĕнтĕ пирĕн те «иккĕ» юсанать!

— Задачине шутланă-и?— ыйтать Венюкĕ, пĕлес килнипе кăсăкланса.

— Шутланă!— тет Актай.

— Апла пулсан, «иккĕ» илес хăрушлăх иртсе кайрĕ. Ур-ра!— савăнать Венюк.

Актай Урине тетрадьне хăйĕн кĕнеки хушшине хĕстеркелесе аппаланнă чух ҫырăвĕ тухса ӳкет. Ăна хăй те, ыттисем те асăрхамаҫҫĕ.

— Эпир каятпăр,— пĕлтерчĕ Актай Уринене.— Тетрадьне шкулта илĕн. Венюк пырса парать.

Венюк хăйĕн шкул сумкине, купăсне ҫурăмĕ хыҫне ҫакса Актай ҫумне пырса тăрать. Вара Урине ҫине пăхса:

— Эпĕ сана туххăмрах тавăрса паратăп. Эсĕ, Урине, ан пăшăрхан, тетрадьне ҫурмăпăр та, ватмăпăр та.

— Ытлашши иртĕхетĕр,— тет вĕсене Урине.— Герман Андреевича веҫех каласа паратăп.

Ачасем пĕр-пĕрин ҫине пăхса илчĕҫ.

— Ас ту, ҫăварна уҫнă пултăр, хăвнах кайран йывăр пулĕ,— асăрхаттарать Актай. Венюкĕ те пӳрнипе юна-юна калать:

— Ăнлантăн-и? Ун пек, кун пек шарлас пулсан хăвнах хурлăх тӳсме тивет.

Ачасем кайрĕҫ. Урине пĕчченех тăрса юлчĕ. Ҫав тери хурланчĕ вăл. Куҫҫулĕ шăпăр юхса анчĕ, ĕсĕклет.

— Ах, ытла та усал ҫав Актай,— калаҫать Урине.— Шкулта та, урамра та ыррине ан кĕт унран. Венюкĕ йĕркеллĕ ача пекчĕ. Мĕн пирки унпа ҫыхăннă? Ах, халь пулса иртнĕ ĕҫ ҫинчен калас-ши, калас мар-ши? Каласан, урама та ан тух вара. Юрĕ, каламăп.

Урине кĕнекисемпе тетрачĕсене сумкине чикнĕ чух Тина ҫитсе тухать. Вăл шыв ăсма аннă-мĕн.

— Урине, эсĕ-и ку? Кам тиврĕ сана?— ыйтрĕ вăл, витрисене ҫĕре лартса.

— Никам та тивмен.

— Мĕнле никам та? Мĕншĕн йĕретĕн?

Вăл Уринене пулăшма, кĕнекисене тирпейлеме тытăнчĕ. Ҫав вăхăтра умра ух! тени илтĕнчĕ, хĕрачасем шартах сикрĕҫ.

— Эсĕ-çке ку, Илле?— терĕ Тина. Унтан хăтăрса каларĕ.— Мĕн хăратса çӳрен? Бригадир те сана. Выляса çӳретĕн ху.

Илли савăнать, кула-кулах сăмах хушать:

— Бригадирĕн выляма та юрамасть, тет-и?

— Бригадире, паллах, килĕшмест. Эсĕ çапах та ахаль бригадир мар-çке, коммунизмла ĕçлекен бригадă пуçлăхĕ. Сан хăвна яланах мăнаçлăн тытмалла. Кала-ха, вăрмана кайса килтĕр-и? Пăрусене, ĕнесене çӳретме вырăн тупрăр-и?

— Тупрăмăр, тупрăмăр. Кам шыв ăсма каять сирĕнтен?

— Ну, эпĕ. Пĕрре те йĕркеллĕ каласа кăтартмастăн,— кăмăлсăрланать Тина.

— Эсĕ хăвăн пионеркуна шкула ăсат, эпĕ унччен шыв ăсма кайса килем,— тавăрать хирĕç Илле.— Вара пĕтĕмпех каласа паратăп.

Илле пушă витресене илчĕ те чуптара пачĕ çырманалла.

Шкул енчен Урине юлташĕ Суйка чупса çитрĕ. Вăл Тинăна сывлăх сунчĕ те тусне васкатма тытăнчĕ.

— Урине, мĕн туса тăратăн? Часах шăнкăрав пулать, атя хăвăртрах. Шкулта эсĕ çук та çук. Чирлемен-ши тесе, сирĕн пата пыма тухрăм.

Суйка Тинăна та хăйсемпе шкула чĕнчĕ. Анчах та вожатăй уроксем пĕтнĕ тĕле тин пыма пулать.

Хĕрачасем чупсах кайрĕç. Тина вĕсене алă сулса юлчĕ. Пĕччен юлнăскер каллĕ-маллĕ уткалать, пĕр çаврăм юрă та ĕнрешрĕ. Илле шыв çĕклесе хăпарни курăнмасть-ха. Ыт ахальтен тенĕ пек вăл туфли çине пăхса илчĕ. Çак вăхăтра ура айĕнче выртакан тăваткал хуçлатнă хут курчĕ.

— Çыру! Урине ӳкерсе хăварнă-ши кăна?— шухăшларĕ вăл хут таткине пĕшкĕнсе илнĕ май.

— Пĕр-пĕр ача çырать ĕнтĕ ун патне. Пĕчĕккĕ чухне хамăр та çыру çӳрететтĕмĕр. Ха-ха-ха! Айвансем. Илле мĕнле ача пулнă-ши пĕчĕк чух? Шел, тăххăрмĕш класра çеç пĕрле вĕреннĕ. Вулам-ха.

«Çыру.

Юратнă...»

Тина каллех çыру вулама чарăнсах кулса илчĕ.

— Каларăм вĕт, юратуллă çыру тесе, çапла пулчĕ те,— тет вăл.— Малалла вулам-ха.

«Юратнă шăллăм...» Акă тата... Мĕнле çыру пулчĕ ку? Малалла вулам-ха.

«Эсĕ пĕчĕккĕ-ха, шкулта çеç вĕренен. Нумай япалана ăнланмастăн. Тĕнчере ай-яй йывăр. Пурнăç тени вăл, шăллăм, вăйă мар. Çынсем усал. Сана ятлаççĕ, тиркеççĕ. Нумай чух мăшкăла та тӳсме тивет. Анчах та эсĕ никамран та ан хăра. Ху мĕн тăвас тенине ту. Мĕншĕн тесен санăн пиччӳ пур. Вăл сана кирек хăçан та хӳтĕлеме хатĕр тăрать. Асра тыт: тăвансен пĕр-пĕрне пулăшмалла. Халлĕхе эсĕ çак çырăва паракана

итлесе пурӑн. Ун сӑмахӗнчен ан тух. Вӑл хушнине пӗтӗмпех ту».

Тина ҫырӑвне вулама тӑрӑнчӗ. Сӑн-питрен улшӑнчӗ. Каллех вулама тытӑнчӗ. «Ҫырӑва вуласа тухсанах ҫурса пӑрах. Ку ҫырӑва сансӑр пуҫне никам та вулама тивӗҫлӗ мар».

Ҫыру тытнӑ аллине Тина лаштах усрӗ. Такамран тилмӗрсе ыйтнӑн: «Кам ҫырать кӑна?»—терӗ. Тупсӑмне ҫыру ҫеҫ уҫса пама пултарнӑ пек, ӑна каллех вулама тытӑнчӗ: «Сан пиччӳ».

Тина кӑмӑлӗ канӑҫмарӗ. Пӗлес килет: кам ҫырнӑ ӑна? Кам-ши шӑллӗ? Хӑйӗнчен хӑй ыйтрӗ Тина, такама аса илес пек. Пуҫӗнче шухӑш мӗлтлетет: «Шкул ачи ӗнтӗ вӑл. Ӗлкӗрчӗ-ши ҫак ҫырӑва вулама? Эх, халех курса калаҫасчӗ ку ачапа ман. Эпӗ вожатӑй, манӑн ӑна пулӑшмалла. Мӗнле, ӑҫтан пӗлес? Йывӑр-ҫке вожатӑй ӗҫӗ. Сахал пурӑннӑ, сахал ӗҫленӗ. Майне пӗлейместӗп...»

Тина тупнӑ ҫырӑва хышалансах саппун кӗсйине чиксе хучӗ. Хӑйӗн алли чӗтрет. Мӗншӗн питваскать, такамран пытарать-и? Хӑрать-и? Ҫырмаран Илле хӑпарать иккен. Унӑн икӗ аллинче икӗ тулли витре. Каччӑ шӳтлесе, палламан пекех умран иртсе каять. Тина улшӑнчӗ, паҫӑрхилле салху мар. Пичӗ каллех хӗвел пек ҫуталать. Халь вӑл ӗҫшӗн антӑхакан харсӑр хӗр. Чӑнкӑлти сассипе кулса:

— Пӑх ӗнтӗ, ӑҫта каять ку ҫын?— тет.— Чарӑн-ха, Илле, санран ыйтса пӗлмелли пур.

— Э-э! Пӗлетӗп эсӗ мӗн ҫинчен ыйтассине,—тет Илле, шыв витрисене лартса. Унтан рапорт панӑ евӗр хӑвӑрт-хӑвӑрт калама тытӑнать:— Вӑрманта ӗнесене ҫитермелли питӗ селӗм вырӑн тупрӑмӑр. Кӳлӗ тавра пӑрусене ҫӳретме улӑх сип-симӗс ешерет. Ҫитес эрнере выльӑхсене вӑрмана куҫаратпӑр. Пӑрӑвусене пӗлтер, хатӗрленччӗр.

— Юрӗ. Тавтапуҫ,— пуҫне тайрӗ Тина кулса.— Ятарласа пӑрусене строя тӑратса тухатӑп та сан ятран пӗлтеретӗп. Анчах та эсӗ манатӑн пулас, хисеплӗ бригадирӑм, эпӗ коммунизмла ӗҫлекен бригадӑн членӗ кӑна мар, пӑрусем ҫеҫ пӑхмастӑп, эпӗ тата вожатӑй, манӑн пионерсем пур.

Илле кепкине хывса пуҫ тайрӗ те шӳтлесе ҫапла каларӗ:

— Тархасшӑн, пионерусене — салам!

Тина кӑмӑлсӑрланчӗ курӑнать, сассине хӑпартрӗ:

— Санӑн бригадир мар, артист пулмаллаччӗ. Тӗрӗссипе тӳрех кала-ха эсӗ: практикӑ иртерме ман отряда бригадӑна йышӑнатӑр-и е ҫук? Вӗсем те комсомолецсенчен пурӑнма, ӗҫлеме вӗренесшӗн.

— Э-э, хӑвна вожатӑй тесе мухтанан. Эпир тахҫанах ун ҫинчен калаҫса татӑлнӑ ӗнтӗ. Эсӗ пур, халӗ те пӗлместӗн. Эх, лӗпӗш!

Тина хӗпӗртерӗ. Пӗр вырӑнта тӑпӑртатса илчӗ:

— Чӑнах йышӑнтӑр-и, Илле?

Илле Тина ҫине пӑхса кулмасӑр тӳсеймест.

— Пӗр саншӑн кӑна,— текелет.

— Мӗнле лайӑх бригадир эсӗ, Илле, тупата,— тет Тина. Хӑй Иллене ярса тытса лӑскаманни кӑна.— Ур-ра! Пӑхса тӑр, концертпа пыратпӑр!

Тина кӗвенте илсе витрисене ҫаклатасшӑн, анчах Илле памасть, вӑл хӑй йӑтасшӑн.

— Юрӗ-ҫке, ан хӑра,— тет Илле.

Иккӗшӗ те, тӑвайккинелле хӑпарса, тӑкӑрлӑка кӗрсе кайрӗҫ. Тинӑн хул пуҫҫи ҫинче витресӗр кӗвенте, Иллин икӗ аллинче те тулли шыв витри.

3

Шкул. Вӑл ытти шкулсенчен нимӗн чухлӗ те уйрӑлса тӑмасть. Коридорта пуш-пушах. Пурте урокра. Акӑ пионерсен пӳлӗмӗ. Хӑтлӑ кунта, пионерсен пӳлӗменче. Стена ҫумӗнче Ленин портречӗ. Сӗтел ҫинче хаҫат-журналсем. Кӗтесре пионерсен параппанӗсем, горнӗсем. Такам чӳречисене яриех уҫса хӑварнӑ. Пахчаран таса сывлӑш кӗрет.

Кичемленсе ларасран шикленме кирлӗ мар, коридорта шӑнкӑрав янӑрарӗ. Классенчен халех тухаҫҫӗ ачасем палкаса. Самант та иртмерӗ ав, хӗвӗшме те пуҫларӗҫ. Хӑш-пӗрисен урок пӗтнӗ тем, ҫурӑм хыҫне сумкисене ҫакнӑ. Нумайӑшсем пахчана тухрӗҫ те кантӑк умне пухӑнчӗҫ. Шавлаҫҫӗ кӑна. Мӗн ҫинчен калаҫаҫҫӗ вӗсем? Итлер-ха.

— Улттӑмӗш клас ачисем, киле ан саланӑр!

— Мӗншӗн?

— Репетицие юлмалла пурин те.

Пӗр ача урамран пахчана кӗчӗ.

— Венюк!— кӑшкӑрчӗ вӑл тӳсеймесӗр.

Шкултан тин ҫех тухнӑ Венюк ун патне чупса пычӗ.

— Актай, эсӗ мӗншӗн урокран тарса ҫӳрен?— ыйтрӗ вӑл.

— Герман Андреевич задачӑ шутлайманшӑн ятласа пӗтерчӗ те кӑмӑл хуҫӑлчӗ,— тет ӳрӗк-сӳрӗккӗн Актай.

— Арифметикӑ урокӗ урӑх пулмарӗ.

— Шкула кӗрес те килмест. Пур пӗрех мана тепӗр класа куҫармаҫҫӗ. Герман Андреевич кун ҫинчен мана темиҫе хут та асӑрхаттарнӑ. Ҫавна пулах мана класра никам та юратмасть, хамӑн та никама та итлес килмест. Таҫта вӗҫсе кайӑттӑм.

Венюк ӑна аллинчен ярса тытрӗ те каларӗ:

— Атя, ҫакӑн ҫинчен Тина вожатӑйпа юмахлар.

Актай ӑна хирӗҫлет.

— Ну, тата!— тет вӑл ҫиллессӗн.— Элеклесе, сӳпӗлтетсе ҫӳреме юратмастӑп эпӗ. Пире арҫын ачасене килӗшмест ун пек.

Иккӗшӗ те пӗр хушӑ чӗнмеҫҫӗ. Шӑплӑха Актай сирчӗ:

— Венюк, пыратӑн-и манпа? Эпӗ сана чӗнме килтӗм.

— Аҫта?

— Чукун çул çинче ĕçлекенсем патне.

— Юрамасть. Тина килсен репетици пуçланать. Бригадăна концертпа кайма хатĕрленетпĕр.

Актай ассăн сывласа ячĕ.

— Эпĕ сирĕнпе пыраймастăп,— тет.

— Мĕншĕн?

— Ав, Тина килет. Эпĕ вĕçтеретĕп.

— Ан кай!

Актай итлемерĕ. Йывăççем хыççăн вĕлтлетсе пахча кĕтессинелле кайса çухалчĕ.

Тина пионерсен пӳлĕмне кĕчĕ. Шухăшлă. Каллĕ-маллĕ утать. Хăйпе хăй калаçать: «Çыру çухатнă ачана тепле пулин те тупмаллах...»

Пӳлĕм алăкĕ уçăлчĕ те Урине курăнчĕ.

— Тина Петровна, эсир чĕннĕ-и мана?— ыйтрĕ вăл алăк урати урлă каçма хăяймасăр.

— Чĕннĕ, Урине, чĕннĕ. Кĕрсем пӳлĕме. Санран ыйтса пĕлмелли пур.

Тина калаçнă май саппун кĕсйинчен çыру кăларчĕ.

— Урине, кала-ха, çак çырăва эсĕ çухатман-и?

— Ой! Мĕнле çыру ку? Эпĕ ăна халиччен куçпа та курман.

— Тупрăм эпĕ ăна.

— Ăçтан тупрăн?— тĕлĕнет Урине.

— Ас тăватăн-и, сана кĕнекесем пухма пулăшнине? — аса илтерчĕ хĕрачана.— Эсĕ кайсан, çав вырăнта тупрăм. Тахăшĕ шăллĕ патне янă.

— Ман шăллăм çук, Тина.

— Санăн шăллу çуккине пĕлетĕп-ха.

— Ой, Тина, тавçăрса илтĕм,— хыпаланса ӳкрĕ Урине.

— Мĕскер?

— Ăна Актай çухатса хăварман-ши, манран тетрадь тытса илнĕ чух?

Урине тӳрех çăвар уçма шикленчĕ. Тем тытăнса тăрать. Унталла-кунталла пăхать. Никам та илтме пултарманнине ĕненсен тин Тина çывăхне пырса шăппăн пăшăлтатрĕ:

— Актайăн пиччĕшĕ тĕрмере.

— Тĕрĕсех калатăн-и эсĕ, Урине?

— Ой! Мĕншĕн суятăп пулĕ?

Тина тем аса илнĕн сăмса айĕн мăкăртатрĕ: «Эппин, вăл çухатман-ши? Анчах та Актая çыру пирки тем тусан та шарлама юрамасть. Унпа халĕ нихçанхинчен те кăмăллă пулмалла. Çыру кам пачĕ тесе ыйтсан, вăл хăраса ӳкме пултарать. Мĕн тăвас ĕнтĕ? Ĕç майĕсене пĕлместĕп. Çитменнине тата, хам ку ялсем мар. Çыннисене пурне те палламастăп».

Урине вожатăй çине куç илмесĕр пăхса тăрать. Тем пекех пулăшĕччĕ. Анчах мĕнле?

— Герман Андреевич Актайран урок ыйтрĕ-и?— пĕлесшĕн пулчĕ Тина.— Мĕнле паллă лартрĕ?

Урине иккĕленсе тăчĕ. Мĕнле каласан юрать-ши?

— ...Мĕн... Актайăн арифметикăпа çаплах «иккĕ» юлчĕ.

Тина пăшăрханнă май шухăша кайрĕ: «Куçармасăр хăварма пултараççĕ ăна,— терĕ вăл.— Актая хамăрпа пĕрле фермăна практикăна илсе каймаллах. Лере куç умĕнче, пулăшатпăр. Пĕччен юлсан, ача алăран вĕçерĕнет. Çырăвĕнчен ытла, çыру параканни хăратать. Кам-ши вăл Актай валли çыру илсе килнĕ çын? Герман Андреевичпа калаçса пăхас-ха. Вăл çапах арифметикă учителĕ çеç мар, клас руководителĕ те».

Хĕрача умне пырса тăчĕ Тина.

— Урине, Герман Андреевич учительскинче пур-и, кайса пăхсам?

— Ой, эпĕ унтан питĕ хăратăп. Вăл çав тери хаяр. Пĕркун ун урокĕнче, теплерен-çке, тетрадь уçса пăхрăм та, çавăншăн мана хытах асăрхаттарчĕ.

Тина сĕтел хушшине ларса васкасах тем çырма пуçларĕ. Урине тăчĕ-тăчĕ те ерипен ыйтрĕ.

— Тина, эпĕ ачасем патне тухатăп. Юрĕ-и?

— Тухах.

Урине, алкум вĕçне тухсан, унталла-кунталла пăхрĕ. Вăл Венюка курчĕ те кăчăк туртрĕ:

— Венюк, кил-ха кунтарах. Эпĕ пĕр çĕнĕ хыпар пĕлетĕп.

Нумаях та пулмасть кӳрентернĕ хĕрачаран ыррине кĕтмест Венюк. Çавăнпа та вăл мăнаçлăн перкелешет:

— Э-э, сирĕн, хĕрачасен, ялан çĕнĕ хыпар. Ĕненместĕп!

— Ан ĕнен ара, питех кирлĕ пулĕ. Луччă Çемене калатăп.

— Ну, итлеп,— терĕ юлашкинчен тутине пăркаласа.

Урине ун çывăхнерех пычĕ те шăппăн каларĕ:

— Актай патне пиччĕшĕ тĕрмерен çыру çырнă. Ой! Çав тери тĕлĕнмелле çыру! Хăрушла çыру!

— Эх, эсир, хĕрачасем, ялан ӳстерсе калама ăста. Çыру мĕншĕн хăрушла пултăр?

— Ой! Венюк, çырăвĕнчен ытла çыру параканĕ!

— Çырăвне кам панă? — ыйтрĕ Венюк.

— Паллă пулсанччĕ.

— Ас ту! Пуш параппан çапмастăн-и? Тата вăл çыру пирки камран илтнĕ эсĕ?

— Вожатăй каларĕ. Ой! Актая питĕ хĕрхенетĕп.

Венюк тек пĕр сăмах та чĕнмерĕ, тӳрех утса кайрĕ.

— Ăçта каян эсĕ?— чарчĕ ăна Урине.

— Ваштах Актай патне кайса килетĕп. Пĕлес, мĕнле çыру.

— Ой! Ан кай, юрамасть!

Лешĕ аптраса тăчĕ.

Урине çăвар хупмасăр пакăлтатать:



— Тина çыру пирки халлёхе Актая тем тусан та калама юрамасть, тет. Вăл хăраса ӳкет те вара унпа тем тусан та çывăхланаймастăн.

Венюк хĕрачан сăмахне ĕненет те, ĕненмест те. Çапах та каймарĕ, юлчĕ. Вăл тем каласшăн пулса çăварне уçрĕ, анчах сасси тухмарĕ. Чăрмантарчĕç-ши? Шăп çак вăхăтра крыльца çине Тина тухрĕ. Вĕсене курсан, йăл кулса илчĕ те, ăшшăн сăмах хушрĕ:

— Эсир кунтах-çке. Эпĕ ытти ачасене кайса пухса килем-ха.

Тина кайсан, Венюк çĕрелле пăхрĕ те унччен калама тăнă сăмахне пуçларĕ:

— Урине, эсĕ мана çилленместĕн-и?

— Ой! Мĕншĕн?

— Ара-çке... Йăмра патĕнче тетрадь тытса илнĕшĕн. Сисмесĕрех юлтăм, тепле пулса тухрĕ. Эсĕ, э-эх, калаймарăм... Эсĕ мана каçар. Эпĕ тек нихçан та кунашкал хăтланмăп.

Урине кӳреннĕреххĕн пуçне пĕкрĕ. Венюк çине пăхмасăр юмахларĕ:

— Пултăрах. Мĕн каçару ыйтмалли пур уншăн.

— Каçар ĕнтĕ, юрать-и?

— Ăхă,— терĕ Урине аранах.

Ачасем спорт площадкине пухăнчĕç. Тина та кунтах. Репетици пуçлама вăхăт.

— Венюк!— кăшкăрчĕ Тина,— купăс илсе тух!

Венюка пукан лартса пачĕç.

— Хăш ташă кĕввине каламалла?— ыйтрĕ вăл.

— Икĕ ача та икĕ хĕрача.

— Вăл ташша ташлама пултараймастпăр,— кăмăлсăррăн пĕлтерчĕ Суйка.

— Мĕншĕн?

— Актай çук.

— Ăçта вăл?

Хирĕç никам та чĕнмерĕ. Тина сăнарах пăхрĕ ачасене.

— Актай ăçтине никам та пĕлмест-и?

Ку хутĕнче Венюк хăю çитерчĕ:

— Малтанхи урок хыççăнах шкултан тухса кайрĕ. Ăçта вăл халь, калама хĕн.

Тинăн сăнĕ салхуланчĕ. Актай çукки пăшăрхантарать ăна.

— Ун вырăнне Сяпука тăратас,— сĕнчĕ Суйка.

Сĕнӳ пурне те килĕшрĕ. Сяпук хирĕç мар. Ташша пĕлмен çын-и-мĕн?

Венюк купăсне тăсса ячĕ. Кĕвĕре тепле вăй-хăват пурах çав! Пĕтĕм кичемлĕх сирĕлет, урасем çемĕ майăн шукалаççĕ çеç.

Ташă вĕçленсен, Тина ачасене мухтамасăр тӳсеймерĕ:

— Маттур,— терӗ вӑл,— артистсем пекех ташлатӑр. Халӗ сире пӗр хыпар калатӑп.

Тина практикӑ хӑçан пуçланасси çинчен пӗлтерчӗ. Ачасем ӑна хапӑлласах йышӑнчӗç.

— Венюк, ой! Эсӗ ӑçта каян? — ыйтрӗ Урине репетицинчен саланнӑ чух.

— Киле.

— Атя Актай патне каяр, э? Эпӗ ӑна задачӑ шутлама пулӑшӑп.

— Актай патне тетӗн-и? — тӗлӗнчӗ Венюк.— Ай-яй! Каятпӑр. Анчах та хамӑр мӗн пӗлнине шарламалла мар вара.

Юлашкинчен вӗсем Актай патне кайма килӗшсе татӑлчӗç.

Шкултан Герман Андреевич тухрӗ. Тина ӑна курсан саванса ӳкрӗ. Ун патне чупса пычӗ те йӑлӑнма тытӑнчӗ. Актая арифметикӑпа «тӑваттӑ» лартса пама тилмӗрет. Ун пек тусан çулталӑкшӑн «виççӗ» тухать. Вара ӑна тепӗр класа куçараççӗ, бригадӑна практикӑ иртterme пӗрле пырӗ. Анчах та Тина çыру пирки çӑвар уçмасть.

Учителӗ тӗлӗнет пулин те вожатӑйӑн шухӑшне тавçӑрса илеймест, çавӑнпа та хирӗçлет. Ача мӗнле вӗреннине учитель хак парать-çке. Лешӗ Актая çу каçипех пулӑшма пулать. Çӗнӗ вӗренӳ çулӗнче ача лайӑх вӗренессе шантарать.

Герман Андреевич чылайччен тавлашрӗ пулин те вожатӑй кӑмӑлне ытараймарӗ. Кунашкал вӗри чӗреллӗ çамрӑксем хӑйсем панӑ сӑмаха пурнӑçлаççех.

— Юрӗ,— килӗшрӗ вӑл юлашкинчен,— анчах пӗлсе тӑр, ӳлӗмрен кунашкал ыйтупа ман пата ан çулӑх.

— Итлетӗп!

Кӑмӑллӑн уйрӑлчӗç. Тина Актая савӑнӑçлӑ хыпар пӗлтерме васкарӗ. Пуçра шухӑш: Актай пӗрремӗш урок хыççӑн тарнӑ. Ырра пӗлтермест ку. Калаçмаллах унпа.

...Шкул пахчи. Ӑна карта тытса çавӑрнӑ. Шкул пахчине кӗмелли калинкке те пур. Сад пахчинче тем тӗрлӗ йывӑç та ӳсет. Çак йывӑççене лартнӑ ачасем шкултан тахçанах вӗренсе тухнӑ. Кайӑкӗсем мӗнлерех савӑнса юрлаççӗ. Куккукӗ те авӑтать. Ах, ытла та чуна çӗклентерет-çке тӗнче илемӗ! Чим, çутçанталӑк ырлӑхӗпе кӑмӑл туличчен киленейместпӗр курӑнать. Карта çумӗпе ав, Апуç килет. Хӑй чукун çул çинче ӗçлекенсен тумне тӑхӑннӑ, хӳме хушӑкӗнчен сад пахчинелле пӑхапӑха илет.

Калинккерен хул айне портфель хӗстернӗ Герман Андреевич тухрӗ, киле каять-тӑр.

Акӑ тата, мӗне пӗлтерет? Апуç, учителе курсан, палт çаврӑнчӗ те лӑпчӑнчӗ, хыпалансах уринчиноскине юсам пекки турӗ. Учитель иртсе кайрӗ.

«Кӗтмен тӗл пулу,— терӗ Апуç, учитель кайнӑ еннелле пӑхса.— Герман Андреевич чарӑнса калаçнӑ-мӗн пулсан,

паллатчех... Ăçта çӳрет-ши Актай? Каланă çĕре пымарĕ. Шкул пахчинче мар-ши? Никам та курăнмасть кунта...»

Мĕн пулчĕ? Апуç хăпăл-хапăл пиншакне хыврĕ те лупашканалла вăркăнтарчĕ, шап-шур кĕпе вĕççĕн тăрса юлчĕ. Ăна хирĕç Тина килет-мĕн. Акă вĕсем пĕр-пĕринпе танлашрĕç.

А п у ç. Салам, Тинăна, вожатăй юлташа!

Т и н а. Мана пионерсем кăна вожатăй тесе чĕнеççĕ. Сире паллаймарăм, хальччен курман пулас.

А п у ç. Курма та пултарайман. Эпĕ кунта килни темиçе кун çеç-ха. Институтра вĕренетĕп. Студент. Халĕ хурăнташсем патне хăнана килтĕм. Акă ĕнтĕ сирĕнпе паллашрăмăр.

Т и н а. Питĕ аван. Каçарăр. Манăн васкамалла. Актай пионер патне каймалла.

А п у ç. Пионер патне? Хĕ. Тина, сире эпĕ акă мĕн каласшăн: ачасемпе ăçта та пулин кайнă чух хăвăр хыçăрта мана курсан ан кӳренĕр. Эпĕ те ачасене питĕ юрататăп.

Т и н а. Тăрăшăп.

Апуç такам хăваланăн хăвăрт-хăвăрт утса кайрĕ. Вожатăй тĕлĕнсе юлчĕ.

## 4

...Çеçкене ларнă çĕмĕрт хăйĕн ырă шăршине таврана сарать. Сывлăш калама çук уçă. Пахча çумĕсемпе, пӳрт умĕсемпе утнăçемĕн утас килет.

Пурана хирĕç кивĕрех çуртăн крыльцинчен урамалла икĕ çын тухрĕç. Пĕри хĕвел пек çуталса тăракан яка питлĕ çамрăк ача, тепри — пичĕ пĕркеленсе пĕтнĕ карчăк. Ватă çын аллинче — туя.

— Актай мăнукăм,— чĕнчĕ хыçалалла çаврăнса кинемей (ку Актайăн асламăшĕ),— чипер юл. Эпĕ чăх-чĕп фермине каятăп, часах таврăнаймастăп.

— Фермăна мĕншĕн каян, асанне? Ларасчĕ килте сан.

— Эх, турăçăм, ешĕл-ха эсĕ, ăнланмастăн, килте ĕççĕр ларасси вăл — чĕр вилĕм. Кĕтерук кин ывăлĕ патне хулана кайрĕ те, чăх-чĕппе пăхма мана хушса хăварчĕ, ача евĕрех савăнтăм. Вĕсене апат пама йывăр-и мана? Эсĕ кил сыхла. Кĕтӳ ансан, выльăхсене кĕртсе хупма ан ман.

— Юрĕ, асанне, юрĕ,— ĕнентерчĕ Актай.

Крыльца картлашки çинчен анса çитсен те кинемейĕн мăнукне хытарса хăвармаллисем татах тупăнчĕç:

— Эсĕ ачасене киле кĕртсе тустарса ан лар.

Актай кăшт пăхкаласа тăчĕ те килне кĕрсе çухалчĕ.

Нумай-и, сахал-и вăхăт иртрĕ, чукун çул енчен Тина килсе çитрĕ. Вăл Актайсем патне кĕресшĕн. Крыльца çине хăпарчĕ. Алăка уçма пикенет. Сăлăп хунă пулас, уçăлмасть. Вара Тина крыльца çинчен анса кантăк умне пычĕ. Чӳрече уçă, анчах та

унта никам та куранмасть. Çавăнпа та вăл кантăкран пўрнепе шăкăр-шăкăр! тутарчĕ:

— Килте çын пур-и?

Уçă чўречерен Актай пырса пăхрĕ. Вăл, Тинăна курсан, чўречене шăкăр-шакăр хупса та лартрĕ.

— Актай, эпĕ сирĕн пата килсеччĕ,— терĕ вожатăй.

— Асанне килте çук!

— Мана...— теме çеç ĕлкĕрчĕ Тина.

— Э-э, пĕлетĕп, эсĕ ман пирки асаннене элек пама килнĕ.

— Мĕншĕн манпа çав териех тўрккес калаçан? Эпĕ ятлаçма килмен. Эх, эсĕ те çав!

Актай тутине тăсрĕ:

— Ас ту, пĕлмеççĕ пулĕ! Халех акă тытăнан: «Мĕншĕн юлашки уроксенче пулмарăн? Сана куçармарĕç...»

— Йăнăшатăн. Сана куçараççĕ. Тин çеç директорпа калаçрăм. Ачасем пурте сана хăйсемпе пĕрле практикăна илсе каясшăн.

— Чăнах-и?

Актай хавасланса ўкрĕ.

— Тина, тен, эсĕ ахаль калан, илĕртесшĕн? — çиййĕнчех иккĕленчĕ хăй.

— Мĕнех кирлĕ вара санпа пуш сăмах вылятма. Часах вăрманти фермăна ĕçлеме каятпăр.

— «Иккĕ» паллăсем? — вăтаннипе çĕрелле пăхса ыйтрĕ Актай.

— Кĕркунне экзамен тытан. Хатĕрленме хам пулăшатăп.

Актай чўречеренех урамалла сиксе тухрĕ.

— Эх, Актай, пĕлесчĕ сан, вăрманта мĕн тери ырă, фермă кўлĕ хĕрринчех. Кўлĕре каçсерен пулă тытатпăр.

— Вăлтисем пур-и? — тĕпчеме пуçларĕ ача.

— Пур,— çирĕппĕн каларĕ Тина.— Ачасене унта тĕлĕнмелле ĕçсем кĕтеççĕ, уйрăмах техникăна юратакансене. Бригадир ĕнесем сума электродойкă илсе килтерет. Кĕркунне шкула парнелеме вăрманти ўсен-тăрана пухса гербари хатĕрлĕпĕр.

Актайăн куçĕсем йăлтăрма пуçларĕç, кăмăлĕ çĕкленчĕ.

— Эпĕ те пĕрле пыратăп,— терĕ вăл савăнăçлăн.

Калаçса татăлнă хыççăн вожатăйпа пионер сыв пуллашрĕç.

...Лупас хыçĕнчи алăк чĕриклетсе уçăлса хупăнни илтĕнчĕ. Анкартине Актай тухрĕ. Хаваслă. Вăл çĕр мунча патнелле утрĕ. Унта Апуçа курсан, хыттăнах кăшкăрса ячĕ:

— Пичче юлташĕ, пĕлетĕн-и? Манăн савăнăç! Мана тепĕр класа куçараççĕ. Эпĕ ачасемпе пĕрле практикăна каятăп. Тин çеç вожатăй килсе кайрĕ.

— Апла пулсан, эпĕ ăс пани пулăшрĕ сана,— терĕ Апуç тăрса ларса.— Леш хĕрача тетрадьне тытса илсе, задачине çырса илнине учитель пĕлмен-и? Сан пиччў те нихçан задачă шутласа вăхăтне иртермен. Вăл та хĕрачасенчен çапла тытса

илнĕ тетрадьсене. Хĕрача тетрадь пирки учителе каласа памарĕ-и?

Актай кулса ячĕ:

— Çу-ук! Ăна хăратрăмăр, эсĕ хушнă пек.

— Ӳлĕм те çапла мана итле. Яланах ĕç ăнăçлă пулĕ.

— Пичче-çке хăй çырăвĕнче сана итлеме хушнă.

Апуç куçне хĕссе лартрĕ те ыйтрĕ:

— Çырăвне чĕрсе тăкрăн-и?

Актай сасартăк пĕр хĕрелчĕ, пĕр шуралчĕ. Илтĕннĕ-илтĕнми:

— Ёлкĕреймерĕм-ха,— мăк-мак тукаларĕ...

— Ăнланмалла. Хĕрхенетĕн. Пичче япали çапла хаклă вăл. Чĕрмен пулсан кӳр ăна каялла. Çухатăн та, такам тупĕ. Вара кам пиччĕшĕ, кам шăллĕ тесе тĕпчеме тытăнĕç.

Итлесе тăнăçемĕн Актай ассăн сывларĕ те:

— Çухатнă эпĕ ăна,— терĕ, сасси чĕтренерех тухрĕ.

— Мĕн лĕпĕртететĕн!— çиллес сасăпа каларĕ Апуç.— Шыра лайăхрах... тен...

— Паçăр тепĕр хут вуласшăнччĕ, тупаймарăм.

— Тен, эсĕ вожатăя панă?.. Кала чăннине!

— Таçта урамра çухатнă,— терĕ йĕрес патнех çитнĕ Актай. Апуç ĕненчĕ. Тек тăрăнма чарăнчĕ. Тутине çилĕллĕн çыртса лартрĕ. Паллах, ун пуçĕнче шухăшсем вĕлтлетеççĕ. Ку ачапа ытлашши усал пулма юрамасть. Вăл ун енне пĕтĕмпех çавăрăнса ӳкмен-çке-ха. Вĕçерĕнсен уйра вăштăр çиле хăвалаа çитеймĕн. Вăй пуррине туйрĕ, çиттĕр. Ытларах илĕртмелле, вара тем тума та пулать. Вăл кĕсйинчен шоколад туртса кăларчĕ, сĕнчĕ:

— Ме, çи.

Актай мĕн илтнине ĕненет те, ĕненмест те. Çын сасартăк улшăнма пултарнине ăшне вырнаçтараймасть вăл.

— Аюк,— тет илме хăяймасăр,— эпĕ пĕчĕк ача мар вĕт, шоколад çиме.

— Паракантан ил, çапакантан тар,— пат татса хучĕ Апуç.

Актай хăрасарах шоколадне илсе кĕсйине чикрĕ, вара çийĕп, текелерĕ хăй.

Çак вăхăтра Апуç сумкинчен фотоаппарат кăларчĕ.

— Актай, эсĕ ӳкерме пĕлетĕн-и?

— Ӳкерме мар, лайăххăн аппаратне алла та тытса курман.

Апуç кулса ячĕ. Фотоаппаратне тăсса:

— Ме, тытса кур, хĕрхенместĕп,— терĕ.— Кăмăлу пулсан ӳкермешкĕн вĕрентме те пултаратăп.

— И-и-их, кунта тем те курăнать! — кăшкăрчĕ Актай, аппаратăн çаврашки çине пăхса.— Акă карта, чул муклашкисем.

— Ӳкерес тесен, ак çак çекĕлне шăлтăрт! вĕçерт. Пулчĕ те.

— Çапла çеç-и? Ытла ансат-çке,— тӗлӗнет Актай.

— Мӗн кӑткӑсси пултӑр. Ӳкер.

Актай фотоаппаратне илсе мӗнле вӗрентнӗ пек çекӗлне вӗçертет. Часах ӳкерме пултарнӑшӑн савӑнать.

Аппарат вӑрӑм пиçихиллӗ. Тӳсӗм çук, ача хӑпӑл-хапӑл аппарата та хӑй çине уртса ячӗ. Тӑрӑххӑн-тӑрӑххӑн пӑхать.

— Килӗшет-и?

— Килӗшет. Чӑн-чӑн фоторепортёрсем пекех,— мухтать Апуç.

— Манӑн пуласчӗ. Вара!

— Парнелес-и?

— Мана-и? — тӗлӗнет Актай.

— Эсӗ ачи, маттурскер. Саншӑн ним те хӗрхенместӗп. Ил, сан пултӑр.

Актай вӗçсе кайманни çеç.

— Мӗнле ырӑ кӑмӑллӑ çын эсӗ! — тет вӑл,— темшӗн эсӗ мана тӑван пичче пекех туйӑнатӑн.

— Тавтапуç,— тет кулкаласа Апуç.— Анчах та эсӗ аппарата никама та ан кӑтарт.

— Мӗншӗн? Эпӗ Венюк умӗнче мухтанасшӑнччӗ.

— Хӑ, вӑл Герман Андреевича каласан? Вара вӑл пиччӗшӗ парса яман-и, тесе тӗпчеме тытӑнӗ.

Актайӑн самант куçӗсем сӗлкӗшленчӗç. Хӑранӑ сасӑпа:

— У-у, Герман Андреевич пӗлсен тӗпчетех,— терӗ вӑл.

— Эсӗ, ачамушка, ыран юлташупа лере пыр,— хушрӗ Апуç.

— Ыран? Çу-ук, пыраймастӑп,— терӗ Актай пуçне çӗклемесӗр, çаплах аппаратпа ӳкерме хӑтланса.

— Мӗншӗн?

— Ыран пирӗн практикӑ пуçланать.

— Каймастӑн!

Илемсӗр сасӑ Актая хӑратса пӑрахрӗ. Вӑл тӑр-тӑр чӗтресе илчӗ, аллинчи фотоаппаратне чутах ӳкермерӗ. Вӑл куçне мӑчмӑч хупкаласа çапла каларӗ:

— Тина пасӑр хӑй килсе чӗнчӗ. Пысӑк нӳхрепрен çӗр улми кӑларса станцӑна турттармалла, терӗ.

— Эх, эсӗ те çав, кушак çури,— кӑмӑлне çемçетрӗ Апуç.— Ыран çӗр улми кӑларма кай. Вожатӑй сӑмахӗ пионершӗн нимрен те хакли.

Актай çын кӑмӑлӗ сасартӑках çемçелнине туйрӗ. Вӑл ун çине кӑн-н пӑхрӗ.

Кайма тӑнӑ çын каялла çаврӑнса кӗсйисене тӗрӗслекеленӗ май пӗлтерчӗ:

— Э-хе, çамрӑк тусӑм, чутах манман, сана пиччӳ укçа парса янӑччӗ.

— Укçа? — шанмасӑртарах ыйтрӗ Актай.

— Ахӑ. Укçа.

Кĕсйисене тустарчĕ-тустарчĕ, укҫа тупăнмарĕ. Вара вăл ҫапла хушрĕ:

— Манса хăварнă. Ыран ҫĕр улми тиесе станцине каякан машин ҫине хăпарса лар та малтанхи вырăна пыр. Эпĕ сана кĕтетĕп.

Актай Апуҫа ăсатсанах йăпăр-япăр фотоаппарата тытрĕ. Таврара мĕн пулса иртнине те сисмест.

Пахча карти ҫумĕпе хăй патне Уринепе Венюк ҫывхараҫҫĕ. Вĕсем Актая килĕнче тупайман енне кунта килсе пăхма шутланă.

Венюк. Урине, ав ҫав, мунча умĕнче лараканни кам вăл?

Урине. Ой! Актай вĕт ку. Аллинче мĕн ун?

Венюк. Атя хăрататпăр ăна.

Урине. Мĕнле?

— Акă мĕнле,— терĕ те Венюк ҫĕртен пĕчĕк тăпра муклашки илсе ывăтрĕ. Актай шартах сикрĕ. Хăранипе фотоаппаратне хĕвне персе чикрĕ. Лешсем карта урлă каҫса ун патне пычĕҫ.

Актай. Мĕн тăпра муклашкипе перетĕр! Пуҫа шăтарсан?

Венюк. Эпир ыраттармалла мар, выляса ҫеҫ.

Актай. Сирĕнпе такам вылясшăн пулĕ. Кайăр кунтан.

Урине. Ой! Питĕ усал-ҫке эсĕ!

Актай. Усал парăп акă.

Венюк. Кала, тĕрĕссине, мĕн пытартăн?

Актай. Ним те...

Венюк. Эпир пур пĕрех куртăмăр.

Актай. Курнă пулсан ҫырт шăлна!

Венюк. Фотоаппарат вăл сан!

Актай. Суян!

Венюк. Аҫтан тупрăн? Е урока ҫӳрес вырăнне вăрра кайрăн.

Вăрă тени Актая уртарсах ячĕ. Вăл халиччен ҫыннăнне йĕп те илсе курман. Пиччĕшĕ вăрланăшăн тĕрмере ларать тенине те ĕненмест. Тарăхнипе вăл Венюка пĕррех кăкăрĕнчен чышрĕ. Тытăҫса ӳкрĕҫ. Юрать-ха Урине вĕсем хушшине тăчĕ.

— Сана кунта мĕн кирлĕ? — кăшкăрчĕ Актай Уринене, ҫапăҫма чарănса.— Е эсĕ мĕн-и... Венюкăн варли-и?

— Ой! Айван ача иккен эсĕ! — тарăхрĕ хĕрача.

— Кай кунтан! Хĕрачасене тӳсме пултараймастăп.

Актай сăмахĕ Уринене тарăхтарчĕ кăна мар, кӳрентерчĕ те. Унăн куҫĕсем шывланчĕҫ.

— Кай, темесĕрех каяҫҫĕ,— терĕ вăл сăмсине нăш-нăш турткаласа.— Кирлех пулĕ сирĕн тӳпелешнине пăхса тăма.

Вăл чăнах та икĕ ача патĕнчен чупсах кайрĕ.

— Айван ҫын эсĕ,— кăмăлсăррăн каларĕ Венюк.— Ури-

нийĕ пур, хăйне задачă шутлама вĕрентеснĕн ăшталанса çӳрет, эсĕ хăваласа яран.

— Тупнă! Хамах лайăх шутлатăп. Курса тăрăр акă,— мухтанчĕ Актай.

Иккĕш те курăк çине ларчĕç. Пĕри те пĕр сăмах чĕнмест. Шак чулĕпе вылям пек тăваççĕ. Венюк ура çине тăчĕ.

Венюк. Фотоаппаратна кăтартмастăн пулсан, каятăп.

Актай. Кам каларĕ сана кăтартмастăп тесе?

Венюк. Тӳпелешетĕн те ху.

Актай. Халь тӳпелешместĕп. Ан кай. Эпĕ сана сăн ӳкерме вĕрентме те пултаратăп.

Актайăн кăмăлĕ уçăлчĕ. Фотоаппарата хĕвĕнчен кăларса ăна мĕнле тыткаламаллине, ăçтан пăхса курмаллине каласа пачĕ. Аппарат пĕрин аллинчен теприн аллине куçса çеç тăрать. Ачасем иккĕшĕ те хавас. Чăрк-к! та чăрк-к! тутараççĕ кăна аппарачĕпе. Ахăлтатаççĕ хăйсем.

— Ăçтан тупнă кăна— ыйтрĕ Венюк, аппарата мунча умĕнчи сак çине хурса.

— Чукун çул çинче ĕçлекен Апуç пачĕ.

— Мĕншĕн?

— Пĕлместĕп.

— Яланлăхах пачĕ-и вăл сана?

— Пĕлместĕп.

— Ухмахăн пĕр сăмах: пĕлместĕп те пĕлместĕп,— тарăхрĕ Венюк.— Пуç тавра шухăшламалла.

Аппарата нихăш те алла илмерĕ. Ун çине инкек тума пултаракан япала çине пăхнă пек пăхрĕç.

— Актай,— чĕнчĕ Венюк лăпкă сассипе.— Айта санпа тек нихăçан та тӳпелешместпĕр. Тус пулăпăр, э?

— Туссем пулсан иксĕмĕр хушăра мĕн пулса иртнине, ăçта пулнине, мĕн çинчен калаçнине никама та каламастпăр-и? Секретра тытăпăр-и?

— Юрĕ. Сан пек пултăр,— килĕшрĕ Венюк.

— Апла пулсан ме аллăма.

— Ĕмĕр тус пулма тупа тăватăп.

— Эпĕ те.

Икĕ çамрăк йĕкĕт пĕр-пĕрин аллине çирĕппĕн чăмăртарĕç. Тĕнчере татах тепĕр туслăх çуралчĕ.

## 5.

Таврара ача-пăча сасси ян та ян янăрать. Ирхи кӳлĕм вĕсене, улттăмĕш клас ачисене, совхоз машини лартса килнĕ.

Машинă пысăк нӳхрепĕн тепĕр пуçне чарăннă, алăк çывăхне пыма мĕнле те пулин сăлтав чăрмантарнă-тăр. Сахал мар кумрĕç ачасем каллĕ-маллĕ машин çине çĕр улми йăтнă май. Акă ĕнтĕ станцăна юлашки машинă каять.

Актай вожатӑй патне пычӗ. Хӑй йӗп-йӗпе тар. Пӗтӗм вӑйранах ӗҫленӗ пулмалла.

А к т а й. Тина Петровна, эпӗ паян лайӑх ӗҫлерӗм-и?

Т и н а. Хурламалла мар. Практикӑпа «пиллӗк» лартса пама та юрать.

А к т а й. Станцӑна машинӑпа ларса кайма ирӗк пар-ха?

Т и н а. Мӗншӗн? Ямастӑп.

А к т а й. Эпӗ пур пӗрех каятӑп. Станцине яччӑр тесе ҫав тери тӑрӑшса ӗҫлерӗм те...

Т и н а. Ҫавӑншӑн кӑна тӑрӑшса ӗҫлерӗн-и вара эсӗ? Пӗлмен.

А к т а й. Каятӑп, э? Килӗш ӗнтӗ.

Т и н а. Машинӑпа ярӑнса ҫӳрес килет-им сан?

А к т а й. Ӑхӑ. Атя-ха, кала шофера. Мана ларттӑр! Ах, тапранса каять ӗнтӗ.

Т и н а. Юрӗ-ҫке, ярӑнса кил.

Вожатӑйпа Актай калаҫса тӑнӑ ҫӗре каллех ачасем пухӑнчӗҫ. Анчах та вӗсен хушшинче Венюк курӑнмасть. Тина ачасене канма хушать. Хӑй машинӑна ӑсатса яма каять.

Актай вӗтеленет кӑна, унталла-кунталла чупкалать. Урине патне пычӗ те ыйтрӗ:

— Венюк ӑҫта?

— Кам пӗлет ӑна, таҫта ҫӳрет вӑл.

— Ӑх, Венюк кирлӗччӗ. Пӗччене кайма тивет.

Урине Актай ӑҫта каяссине ним те ӑнланмасть, ыт ахальтен кӑна:

— Эпӗ те санпа пырам-и? — терӗ.

— Сире, хӗрачасене, шип-шип чӗпӗсене, ертсе ҫӳреме кӑлӑк чӑххи мар,— тавӑрчӗ Актай. Хӑй вара Тина хыҫҫӑн чупрӗ.

Кузов ҫине хӑпарса ларса ӗлкӗрчӗ ҫеҫ Актай, машинӑ тапранса та кайрӗ.

Нумай та вӑхӑт иртмерӗ, пысӑк нӳхрепрен Венюк тухрӗ.

— Венюк,— чӗнчӗ ӑна Урине.— Ӑҫта пулнӑ эсӗ? Сана Актай шырарӗ.

— Ӑҫта вара вӑл? — ыйтрӗ Венюк, ачасен хушшинче Актая куҫпа шыраса.

— А-ав! машинӑ ҫинче ларса пырать,— терӗ Урине, аллипе машинӑ кайнӑ ҫӗрелле кӑтартса.— Станцӑна кайрӗ.

— Ман станцӑна каяс килмест.

Тина ҫывхарчӗ те ачасене илме ятарласа машинӑ килесси ҫинчен пӗлтерчӗ. Вара пурте вӑрманти фермӑ ҫуртне каяҫҫӗ. Малалла шкул ачисен практики унта иртет. Килӗшсен вӗсем ҫакӑнта ҫу каҫипех пурӑнма пултараҫҫӗ. Вожатӑй каланӑ.

Ывӑннӑ пулин те ушкӑнра яланах хаваслӑ ҫынсем тупӑнаҫҫӗ. Ҫавсем кушакпа шӑшилле вӑйӑ пуҫларӗҫ те. Ушкӑна Илле бригадир пычӗ. Ачасем пурте ҫырмана алӑ ҫума чупрӗҫ.



— Мĕн эсĕ, Илле, уяври пек хитре тăхăннă? — ыйтрĕ Тина.

Вăл Шупашкара комсомол обкомĕн пленумне кайма пуçтараннă-мĕн.

Станцăран ачасене илме машинă çитрĕ. Машинă çинчен Актай сиксе анчĕ те Иллепе Тина тăнă çĕрелле пырать.

— Актай, ачасем çырмара. Кайса васкат вĕсене! — хушрĕ ăна Тина.

— Ну, мĕнле ку ача сирĕн? — ыйтрĕ бригадир Актай пирки.

— Чиперех пек туйăнать. Усалли сисĕнмест. Паян аван ĕçлерĕ.

— Çыру пирки ним те пĕлтермерĕн-и?

— Çук. Вăрманти фермăра эпĕ ăна куçран вĕçертместĕп. Ачасем пухăнаççĕ.

— Шăпланăр-ха, сире ырă хыпар пĕлтересшĕн,— чарать Илле çамрăк йыша.—Совхоз директорĕ лайăх ĕçленĕшĕн сире тав тума хушрĕ.

— Ой! Мĕн тери хисеп,— хавасланчĕ Урине,— пире совхоз тав тăвать!

— Мĕнех вара,— пӳлет Уринене Венюк, хăйĕн çурăм хыçĕнчи хут купăсне майласа.— Халĕ эпир фермăра ĕçлекенсене концерт кăтартăпăр.

— Актай, илтрĕн-и? Сан ташламалла.

— Мĕн пĕрмаях çулăхатăн эсĕ ман çума,— хăтăрса илчĕ Актай Уринене.— Кала, ав, Венюка.

Пурте машинă патнелле утрĕç. Венюкпа Актай хыçалта калаçса пыраççĕ.

— Венюк, паçăр таçта çухалтăн эсĕ? Шырарăм-шырарăм,— пĕлтерчĕ Актай.

— Ма кирлĕ пултăм? — ыйтрĕ Венюк.

— Станцăна пĕрле каясшăнччĕ.

— Мĕн лайăххи пур унта?

— Ман чукун çул çинче ĕçлекеннине курмаллаччĕ те. Сана та унпа паллаштарасшăнччĕ.

— Куртăн-и?

Куртăм. Вăл пире иксĕмĕре хăй патне пыма чĕнчĕ. Кайăпăр-и? Фотоаппаратне каялла илсе юлчĕ. Ӳлĕм парăп, тет.

Тепĕр самантран ачасем лартнă машинăсем тапранса кайрĕç.

## 6

Вăрман. Çĕршер çулхи ватă юмансем каш-ш! кашлаççĕ. Уçланкăри кӳлĕ хĕрринче совхозăн ĕне ферми вырнаçнă. Хăмаран çапса тунă çуллахи пӳрт чылай айккинче ларать.

Практикантсем фермăра пурăнма тытăннăранпа самаях вăхăт иртрĕ. Вĕсем кунсерен ĕçе хăнăхса пыраççĕ.

Актай валли вара хăйне майлă уйрăм ĕç тупăннă. Çу-ук. Çын хушнă ĕç мар, пачах урăххи. Чи малтанхи кунах вăл Венюкпа пĕрле фермă таврашĕнче курса çӳренĕ. Сасартăк пăру макăрнине илтнĕ. Хурлăхлă пек туйăннă ăна çав сасă. Фермă çывăхĕнче выртакан хăма куписем хушшинче пĕр ула пăру тăнă. Актай чупса пырать: пăру суккăр иккен. Актай ăна картишне çавăтса çитернĕ. Çавăнтанпа вара вăл суккăр пăрăвăн шефĕ пулса тăнă.

Хăмаран çапса тунă пӳрт таврашĕнче шăп. Вăрман ерипен сывлать. Çавăнпах-и тен, кайăксен чĕвĕл сасси илемлĕн илтĕнсе тăрать... Мĕн ку? Хăйне май кĕвĕленсе тăракан çемĕ çумне тепĕр сасă хутшăнчĕ. Такам кайăксем пек шăхăрать. Çав сасă çывхарнăçемĕн çывхарать. Кам вара? Илле бригадир шăхăрса-юрласа килет-мĕн. Вăл тӳрех крыльца çине хăпарчĕ. Анчах алăка уçма шутламарĕ. Унтан анчĕ, чӳрече айне пĕшкĕнсе пырса тăчĕ. Итлет. Пӳртре калаçаççĕ пулас. Кам пурши? Илле хăпартланса илчĕ те, чӳрече янаххинчен шаккаса:

— Кам пурăнать ку çуртра? — тесе кăшкăрчĕ.

Кантăк карри сирĕлчĕ. Тина сăн-пичĕ курăнчĕ. Иллене курсан вăл чӳречене уçса ячĕ, тхик! кулчĕ. Вара çапла カларĕ:

— Эпĕ шапа ква-ква-как!

— Эпĕ — упа-утаман! — терĕ каллех мăн сассипе Илле.— Кĕртĕр мана! Пĕрле хавас пулĕ!

Кантăк патне Урине пычĕ.

— Ой! Илле пичче, эсĕ-çке ку? Эпĕ хăрасах ӳкрĕм.

Илле *(Уринене сăмсинчен пӳрнипе пусса)*. Каçăр сăмса, эсĕ чăнахах упа килнĕ пулĕ терĕн-и? Ха-ха-ха!

Тина. Урине, кай-ха чӳрече умĕнчен. Ĕçне ĕçле, çырса пĕтермен вĕт-ха? Васка.

Урине. Юрĕ-çке.

Тина. Бригадира киле çитнĕ ятпа салам!

Илле. Хăвăра та сывлăх пултăр!

Тина. Шупашкартан мĕнле ырă хыпар илсе килтĕн?

Илле. Ха, чее иккен! Чӳречеренех хыпар илтесшĕн, пăхха эсĕ ăна.

Тина. Ĕç планĕ тăватпăр, вăхăт çук.

Илле. Аякри çултан ывăнса таврăннă çынна пӳрте чĕнсе кĕртĕр. Унсăрăн пăрахса каятăп.

Крыльцаран васкаса Тина тухрĕ. Ерипен пускаласа Илле бригадир çумне пырса ларчĕ вăл.

— Э-хе,— терĕ Илле,— хăрарăн-и бригадирсăр юласран?

— Ан аташ-ха,— чарчĕ ăна Тина.— Ялан шӳт тăвассупах. Шупашкар хыпарĕсене пĕлтер хăвăртрах.

— Мĕнрен калама пуçлам-ши? — терĕ Илле.— Хула кунсерен мар, сехетпе ӳсет. Станцăран ансанах Чапаев герой кĕтсе илчĕ. Эпĕ ăна курманччĕ-ха. Ленин проспекчĕ калама çук

илемлĕ. Темиçе хутлă çуртсем... Ленин площачĕ те тĕлĕнмелле чаплă. Çулпуçăн палăкĕ таçтанах курăнать.

— Лару ăçта пулчĕ?

— Советсен çуртĕнче.

— Мĕн калаçрĕç унта?

— Пирĕн бригадăна ырăпа асăнчĕç. Сана, коммунизмла ĕçлекен бригадă членне, пионерсен вожатăйне, комсомол обкомĕн мухтав грамотине памалла тунă.

— Кай, ĕненес килмест. Тĕрĕсех-и?

— Хăçан суйнă эпĕ? Сана çеç мар, мана та грамотă панă.

Тина савăннипе ниçта кайса кĕреймест. Кулать, урисемпе тапăртатать.

— Тата мĕн каларĕç, мĕн хушса ячĕç? — ыйтать хĕр.

Сăмах-юмахăн вĕçĕ-хĕрри те çук. Анчах та Илле тепĕр пысăк савăнăç пурри çинчен пĕлтерчĕ. Комсомол обкомĕнче путевкă панă. Тепĕр икĕ эрнерен практикантсенчен пĕрне Хура тинĕс хĕрринчи пионерсен чи чаплă лагерьне — Артека ăсатмалла. Илле путевкине кăларсан, иккĕшĕ те ăна çавăркаласах пăхкаларĕç. Артека кайма кам тивĕç илĕ-ха?

— Ачасемпе канашламалла,— сĕнчĕ Тина.— Эх, савăнаççĕ ĕнтĕ.

Вожатăй юлашки кунсенче ачасем мĕнле-мĕнле ĕçсем туни çинчен каласа пачĕ. Актай пăрăва юратса пăхнине те асăнчĕ.

— Çыру пирки ним палли те çук-и? — ыйтрĕ Илле.

— Халлĕхе çук-ха. Актай ĕçре аван ача. Кашни кунах эпир унпа арифметикăпа вĕренетпĕр. Ăнланать, хуса çитетех. Ăна ялан ăшă сăмах каласа хавхалантарни кирлĕ.

Тина тата Шупашкара, Педагогикă институтне экзамен пама кайнă Герман Андреевич учитель пирки те ыйтрĕ.

— Тĕл пултăм,— пĕлтерчĕ Илле.— Часах таврăнать. Унччен сана ачасемпе ăнăçлăн ĕçлеме ырă сунчĕ.

Ачасем юрласа, шавласа çитрĕç. Анчах вĕсем хушшинче Актайпа Венюк çук. Ăçта вĕсем? Пĕлекен тупăнмарĕ.

— Çухалса каймарĕç-ши? — пăшăрханчĕ вожатăй.

Бригадир Тинăна лăплантарчĕ те практикантсемпе хавасслă калаçу пуçарчĕ: Артека кайма кама уйăрмалла?

Сăмах пуçар кăна, ачасем кайăксем евĕр чĕвĕлтетме тытăнаççĕ.

— Артека Сяпука ярас! — сĕнчĕ пĕри.

— Мĕнпе тивĕçлĕ вăл? — пӳлет çийĕнчех тепри.

— Вăл аван ĕçлет, тата вăл редактор!

Сяпукĕ вара тем парсан та килĕшес çук. Хăй шухăшĕпе вăл ыттисенчен нимпе те уйăрăлса тăмасть имĕш.

Тахăшĕ путевкăна Венюка пама хушать. Вăл тивĕçлĕ иккен, купăс калать.

Чылайччен шавларĕç ачасем. Такама та асăнчĕç, пĕр

Актай ячĕ çеç тухмарĕ. Халиччен ачасен тавлашăвне хутшăнмасăр тăнă вожатăй сăмах илчĕ.

— Артека Актая ярăпăр.

— Ой! Мĕн эсир?

— Мĕншĕн ăна?

— Тивĕçлĕ мар вăл! — терĕç темиçен пĕр харăс.

— Вăл начар вĕреннĕ. Унпа Герман Андреевич та килĕшмĕ,— сăмах хушрĕ тата тепĕр ачи.

— Мĕншĕн? Халех ăнлантарса паратăп,— терĕ Тина, ачасем çине тинкеререх пăхса.— Актай халь тесен халь арифметикăпа экзамен тытма пултарать. Аслă ача вăл. Хăвăрах куратăр, эпир унпа кашни кун ĕçлерĕмĕр, иртнине аса илтĕмĕр. Вăл пĕрре те кая юлман сирĕнтен. Ĕçре тата хăйне япăх кăтартрĕ-и? Суккăр пăрăва пăхать. Хурламалла-и куншăн ăна? Çук. Актай, хăвăрах пĕлетĕр ĕнтĕ, вăл тăлăх. Ашшĕ вăрçăран аманса килнĕскер, юсанаймарĕ.

Вожатăйăн сăмахĕ çамрăк чĕресене ваштах тепĕр май çаврăнчĕ.

— Актая ярас!

— Килĕшетпĕр!

— Актай кайтăр!

Çапла пулчĕ ачасен сăмахĕ. Пурте пĕр шухăш патне пырса тухрĕç: Артека Актая ямалла.

## 7.

Шĕшкĕлĕх. Йывăç айĕнче ӳпле. Çакăнта ертсе тухрĕ Апуç икĕ ачана — Актайпа Венюка.

Апуç. Килĕр, ачасем. Отпуска тухнă хыççăн вăрманта уçă сывлăшра кăшт канас, терĕм... Иртĕр ӳпле патнерех. Курăр, мĕнле пек ӳпле? Эсир те канма пултаратăр кунта.

Актай. Пире ытлашши канса çӳреме юрамасть. Эпĕ вăрманти фермăра пурăнма юрататăп. Мансăр унта пăру тасça кайса пĕтес пур.

Апуç. Пăрах-ха эсĕ калаçма пăру-качку пирки. Е ĕмĕрех пăру кĕтӳçи пулас тетĕн-и?

Актай. Кĕтӳç пулмастăп. Илле пичче пек бригадир пулма хатĕр. Вăл пурне те пĕлет, ăна пурте итлеççĕ, юратаççĕ.

Апуç. Пăрах-ха кирлĕ-кирлĕ мара ĕмĕтленме. Сирĕнтен эпĕ чăн-чăн железнодорожник тăватăп. Чей вĕретсе ярарха, çăмарта ăшалăпăр. Актай, ку сан юлташу-и?

Актай. Юлташ. Паллашăр — Венюк.

Ним чĕнмесĕр тĕлĕнсе пăхса тăрать Венюк. Анчах та вăрахах пăхса тăма тивмерĕ, Апуç ăна та ĕç хушрĕ. Вут чĕртме вăрмантан типĕ çапăсем пуçтарса килмелле. Венюк туртăнса тăмарĕ, купăсне лартрĕ те вăрманалла кĕрсе кайрĕ.

Иккĕн юлсан Апуç котелок çакма патаксем çапкаласа лартнă май сăмах тапратрĕ:

— Мĕншĕн виçĕм кун фермăран тухмарăн? Эпĕ кĕтрĕм.
— Ĕç пулчĕ, май килмерĕ.
— Пиччӳ юлташне манни аван мар. Мĕнлескер ку? — ыйтрĕ Апуç, Венюк кайнă еннелле пуçне сĕлтсе.
— Кам, Венюк-и?..
— Кала, шанчăклă ача-и вăл?
Актай кăшт шухăшласа тăрсан тин юлташĕ çинчен пĕлтерчĕ: итлекенскер, сăмахран тухманскер.
— Юрĕ, апла пулсан,— килĕшнине палăртрĕ Апуç. Вара унталла-кунталла пăхкаласа, шăппăн каларĕ: «Пиччӳ çыру янă. Вăл пире пĕр ĕç тума хушать».
— Пичче? Пар-ха эппин çыруне, вулам,—терĕ Актай, аллине тăсса. Лешĕ ун аллине тĕртсе ячĕ.
— Пиччӳн çырăвне çухатнине мантăн-им? — аса илтерчĕ çиллессĕн.— Мĕн ĕç тума хушнине итле луччă. Çав ĕçе тусан поездпа пиччӳ патне илсе каятăп.
— Тĕрмене-и?
— Айван! — кăшкăрса пăрахрĕ Апуç Актая.— Пиччӳ тĕрмерен тахçанах тухнă вăл.
— Тухнă? — хĕпĕртерĕ Актай.— Эпĕ ăна курасшăн. Мĕншĕн киле таврăнмасть?
— Тĕрмере ларнă çынна кунта пурнăç параççĕ-и вара? Кашниех пӳрнепе тĕллеме хатĕр.
Актай куляннипе ассăн сывларĕ. Ăçта пурăнать апăрша çынни? Ăна пиччĕшĕ выçăллă-тутăллă, мĕскĕн çӳренĕн туйăнчĕ.
— Эй, эсĕ пиччӳ пирки ан пăшăрхан,— çунатлантарма пикенчĕ Апуç Актая.— Вăл çав тери лайăх пурăнать. Хура тинĕс хĕрринче иçĕм çырли çиет те шыва кĕрет, хĕвел питĕнче хĕрĕнет. Пурнăçĕ унăн пыл та çу, ачам.
— Каясчĕ ун патне. Пиччене питĕ курас килет. Эпĕ ăна киле илсе килетĕп.
— Вăл та сана курасшăн. Пыратăн эппин?
— Халь тесен халь.
— Мĕнех вара, вăл хушнă ĕçе çеç тумалла.
— Мĕнле ĕç? Хуш çеç. Пичче тесен, çунакан вут урлă сиксе каçма хатĕр. Хуш, эпĕ ним тăхтаса тăмасăрах, халех...
— Халех, халех! — витлесе илчĕ Апуç,— ĕç халехре мар. Тăнла эсĕ аслисем вĕрентсе каланă чух. Ĕçне вăрттăн, никам куриччен тумалла. Пиччӳ çырăвĕнче вĕрентнĕ пек, пĕр мана çеç итлемелле. Тепĕр тесен, эсĕ килĕшетĕн мана: вĕри чунлă, маттур. Чухах алла лармалли çын. Чухлатăп, хăюлăх та сан ытлашшипех.
Çын мухтанипе Актай савăнать, хăпартланнăçемĕн хăпартланать, татах сатурланать.
Ача пачах хăйне парăннине ĕненсен, Апуç çапла каларĕ:

— Акă мĕн, шăллăм: ыран хĕвел ансан, юлташупа хăвăр кил умĕнчи пура ăшĕнче мана кĕтсе тăратăр. Кайран чукун çул хĕрне кайăпăр. Тупикре ларакан вакунтан, пломбине татса, пĕчĕк ещĕк çĕклесе тухмалла. Эсĕ ан хăра, хăш вакунне кăтартатăп. Анчах манăн айккинче тăмалла пулать. Мĕншĕн тесен мана паллакансем тупăнĕç. Эпĕ, хăвах пĕлен, чукун çул çинче ĕçлекен çын-çке.

— Пире унта тытмаççĕ-и?

— Ĕçе асăрханулла тăвăпăр, пиччӳ хушнине пурнăçламаллах пирĕн.

— Ещĕкре мĕн пур вара?— пĕлесшĕн пулчĕ Актай. Анчах та отвечĕ кĕске пулчĕ лешĕн.

— Пиччӳне кирлĕ япала.

Венюк çапăсем çĕклесе килчĕ.

Апуç хыпаланса ӳкрĕ. Венюка мухтать, пĕрле ларма сĕнет. Вут чĕрĕлчĕ. Çулăм йăлкăшать, шăрт-шарт туса çунать çапă. Котелока вут çине çаксан, Апуç ачасене ӳплерен çăкăр, кăлпасса илсе тухма хушрĕ.

Хăй темшĕн айккинелле пăрăнчĕ.

— Мĕнле çын ку? — ыйтрĕ Венюк.— Мĕншĕн вăл пире кунта илсе килчĕ.

— Калаттăмччĕ-çке сана: чукун çул çинче ĕçлекен çын пирки. Çакă ĕнтĕ вăл.

— Ăмăрт кайăк-и? Сана фотоаппарат панă çын-и?

— Ахă.

— Актай, атя каятпăр, футболтан юлатпăр ахаллĕн.

Çак сăмах çинех Апуç каялла çитрĕ те.

— Сире хăналамасăр ниçта та ямастăп,— терĕ вăл. Хăй çавăнтах кĕсйинчен эрех кĕленчи тата пĕчĕк стакансем туртса кăларчĕ. Ачасене кăвайт умнерех лартрĕ. Ĕнтĕ çăкăр, кăлпасси те хатĕр. Пурте умра. Стакан çине эрех ячĕ те тĕппипех ĕçрĕ.

— Тăванла пурăнар,— терĕ вăл.— Эпĕ сирĕн аслă тус, аслă юлташ. Килĕшетĕн-и эсĕ, Венюк?

Ним те чĕнмерĕ Венюк. Ун вырăнне Актай каларĕ:

— Килĕшет вăл.

Апуç эрех тултарнă стаканне Венюка тăсрĕ.

— Аюк,— хирĕçлерĕ ача.— Мĕн эсир? Эпĕ эрех ĕçместĕп.

— Ха-ха-ха,— кулса ячĕ Апуç.—Кам каларĕ сана ку эрех тесе? Çырла шывĕ — крем-содă. Тепĕр тĕрлĕ каласан — шерпет.

— Эй, ан тилмĕрттер,— сĕнчĕ Актай та юлташне.—Паçăр, ху шыв ĕçес килет теттĕнччĕ.

Апуç ачасем хушшине ларса майлашрĕ. Вара Актая та, Венюка та стакан тыттарчĕ. Аллипе тĕртсех иккĕшне те пĕр харăсах ĕçтерчĕ. Венюк пĕр çăвар сыпсанах чыхăнса кайрĕ.

— Тьфу, армути пек йӳçĕ,— терĕ вăл.

— Ай-яй, ытла та ырӑ мар ку,— кӑшкӑрчӗ Актай, ҫуррине яхӑн ӗҫме ӗлкӗрнӗскер.

— Кӑлпасси ҫийӗр,— хушрӗ Апуҫ.— Илӗр, илӗр. Хырӑм выҫнӑ пулӗ-ха сирӗн. Венюк, сана чи пысӑк татӑкне парам.

Ачасем ҫиме тытӑнчӗҫ, шавлӑн калаҫма пуҫларӗҫ.

— Эх, ҫинӗҫем ҫиес килет,— тет Актай.

— Ҫырла шывӗ те вара. Ним чухлӗ те пылак мар,— пӗлтерет хӑй шухӑшне Венюк та.

Ку сӑмах ҫине Апуҫ ҫапла каларӗ:

— Чӑн-чӑн арҫынсем, шӑллӑм, йӳҫҫине ҫеҫ юратаҫҫӗ.

Ачасем хирӗҫ ним калама та пӗлмерӗҫ. Апуҫ куҫне хӗссе купӑс ҫине пӑхса кӑшт шухӑша путрӗ, хӑйпе хӑй калаҫнӑн пӑшӑлтатрӗ: «Купӑс пур...»

Актай унӑн сӑмахне илтсе: «Купӑс пур ав,— терӗ.— Венюк, кала».

Венюк купӑсне ярса тытма пикенчӗ.

— Юрамасть,— чарчӗ ӑна асли.— Вӑрман — хӑлхаллӑ, уй — куҫлӑ. Паян пирӗн темиҫе ҫынпа пӗчӗк вечер пулать. Эсӗ пирӗн пата, Венюк, купӑс калама пырӑн-и? Ахаль мар. Укҫалла. Сана халех виҫӗ тенкӗ паратӑп.

— Кирлӗ мар,— вӑтанчӗ Венюк.— Эпӗ купӑсне лайӑххӑн калама та пӗлместӗп.

Актай ҫав укҫана илме сӗнет.

Ҫынни ирӗксӗрех укҫине Венюка тыттарчӗ.

Венюк хирӗҫлесе те пӑхрӗ, анчах та хӑй те сиссе юлмарӗ, Апуҫран укҫа илни ҫинчен ҫирӗплетсе алӑ пусрӗ.

Аякра, аякра, вӑрманта тахӑшӗ а-у! кӑшкӑрать.

— Такам вӑрманта аташса кайнӑ пулас.

— Шӑп!— тӑнлать Венюк,— «Актай! Венюк!» тесе чӗнет. Пире вӗт ку!

— Кам-ши вара вӑл? — сасса уйӑрасшӑн пулчӗ Актай.

Апуҫ питрен улшӑнчӗ, пӑшӑрханса ӳкрӗ.

— Тина вӑл,— палларӗ Венюк вӑрманта кӑшкӑракана.— Эпир кун-та-а-а!

Венюк кӑшкӑрни Апуҫа килӗшмерӗ, унӑн ҫӑварне аллипе пырса хупларӗ.

— Мӗн хӑтланатӑн эсӗ, ӑссӑр ача! — хӑмсарчӗ вӑл.— Умра эрех кӗленчи. Эрех ӗҫнӗ тесе, вӑл сире пионертан кӑларса ярать. Айван.

— Ха, эсир улталарӑр пире,— кӑмӑлсӑрланчӗ Венюк.— Ҫырла шывӗ тесе ӗҫтертӗр.

— Ун пек чух уяса тӑмаҫҫӗ,— хирӗҫлет Апуҫ.— Эсӗ эрех ӗҫнӗ-и, ҫырла шывӗ ӗҫнӗ-и...

Сасӑ ҫывхарнӑҫемӗн ҫывхарать.

— Мӗн тӑвас? — чӗтренех ерчӗ Актай.

— Эрех ӗҫме пӗлнӗ пулсан, мӗн тӑвассине те пӗлмелле. Кӗрсе ларӑр хӑвӑртрах ӳплене!

Апуç ачасене ӳплене тӗртсе кӗртет, умне шăналăк карать. Нумай та вăхăт иртмест, ӳпле патне Тина пырса тухать. Арçын ача пекех хăй, шăлаварпа майкă тăхăннă.

Т и н а *(тӗлӗнсе)*. Студент? Кӗтмен тӗл пулу? Мӗн тăватăр эсир кунта, вăрман варринче?

А п у ç. Юлташпа вăрман сывлăшӗнче канас терӗмӗр. Эсир тата ăçталла çул тытатăр?

Т и н а. Пирӗн вăрманти фермăран икӗ ача çухалнă. Çавсене шыратăп. Ах, ывăнтăм вăрман тăрăх çӳресе. И-и, ӳпле те пур-çке сирӗн. Пăхма юрать-и?

А п у ç. Çук, çук, юрамасть. Ӳплере юлташ çывăрать-ха. Çӗркаç кӳлӗре пулă тытса ывăннă.

Апуç кулам пек тăвать. Калаçнă май Тинăна ӳпле умӗнчен пăрса кайрӗ-кайрех.

Актайпа Венюк ӳплерен шăтăк витӗр вӗсене курса выртаççӗ.

— Пăх-ха, пăх,— терӗ Венюк,— вăл чечек татса парнелерӗ. Тина илчӗ. Ку мӗне пӗлтернине ăнланатăн-и?

— Çу-ук.

— Эх, эсӗ те çав, Актай. Тина ăна качча тухма килӗшнине пӗлтерет.

Апуç ачасем пăшăлтатнине сисрӗ пулас. Ал чăмăрне çурăм хыçне тытса вăрттăн юнарӗ.

Т и н а. Итлӗр-ха, студент юлташ, сирӗн каникул мӗншӗн питӗ ир пуçланнă?

А п у ç. Çӗпӗрте практикă иртгернӗ хыççăн кăшт кантарас терӗç.

Т и н а. Тепӗр çултан эпӗ те института вӗренме каятăп.

А п у ç. Кăçал май пур чух мӗншӗн килес çула хăварасшăн?

Т и н а. Кăçал юрамасть.

А п у ç. Мӗншӗн?

Т и н а. Ӗç ăнăçлăхӗн вăрттăнлăхне пӗлсе çитеймерӗм-ха.

А п у ç. Ăнланмастăп.

Т и н а. Выльăх-чӗрлӗх бригадинче мӗн чухлӗ çӗнни, интересли?

А п у ç. Ан култар-ха. Ӗне сăвассинче мӗн çӗнни пултăр? Ӗмӗртен пыракан ӗç.

Т и н а. Йăнăшатăр. Çӗнни — ӗç йӗркинче.

Бригадăри ӗçсем çинчен, çынсен хушшинчи туслă çыхăну çинчен калаçрӗ Тина.

А п у ç. Сире хамăр института вӗренме илсе каясшăнччӗ.

Т и н а. Чимӗр-ха, эсир мӗнле институтра вӗренетӗр?

А п у ç. Эпӗ-и? Эпӗ институтра мӗн... геолог пулатăп.

Т и н а. Эпӗ Мускава ял хуçалăх академине вӗренме каятăп.

А п у ç. Тен, шухăшăра улăштаратăр, манпа пырăр?

Тина. Тем тусан та хам шухăша улăштармастăп.

Апуç калаçăва тек тăсасшăн пулмарĕ. Вăл тем шăпланса, тăнласа тăнă пек пулчĕ. Упа çырми леш енче ачасем кăшкăрнă сасă илтрĕм, тесе пĕлтерчĕ. Тина та тăнлать. Нимĕн те илтĕнмест. Упа çырми тарăн. Ун тĕпне анма Тина кăшт шикленет те.

— Сире,— терĕ Апуç,— çырма урлă хам каçарса яратăп. Тем тесен те сирĕн ачасем. Чиперех илтрĕм.

— Кайрĕç,— терĕ Венюк ӳплерен тухса.— Пирĕн те кунтан хăвăртрах шăвăнмалла.

Апуç хăвăрт каялла таврăнчĕ.

— Тав тăвăр мана, хăвăра инкекрен хăтарнăшăн,— терĕ ачасене вăл.

## 8

Çĕрле. Куçран йĕппе чиксен те курăнмасть. Виçĕ çын çырма урлă каçса тăкăрлăкран урама тухрĕç. Виçĕ çын. Иккĕшĕ — ача, пĕри — çитĕннĕ çын. Вăл йăпшăнса утать. Аякрах та мар пура курăнать. Актайсем пурăнакан пӳрт умĕнчи пура вăл. Чукун çул çинче çутăсем мĕлтлетеççĕ. Вăхăтран вăхăта пăравус кăшкăртнă сасă илтĕнет.

Виçĕ çын шăпах пура патне çитсе чарăнчĕç.

— Кĕрĕр пурана,— хушрĕ асли ачасене.

— Апуç, кунта тĕттĕм, ним те курăнмасть,— хирĕç чĕнчĕ пĕчĕккисенчен пĕри, алăк анинчен пура ăшнелле пăхса.

— Тĕттĕм — пирĕн тус.

Актай Апуç каланă сăмахсен пĕлтерĕшне ним чухлĕ те ăнланмарĕ. Аслă çын каларĕ пулсан итлемелле. Çавă çеç. Малтан вăл çурăм хыçне купăс çакнă Венюка тĕртсе кĕртрĕ, кайран хăй.

— Сас памасăр пурăран нихăшĕ те ан тухнă пултăр,— çирĕппĕн пĕлтерчĕ ачасене Апуç.— Эпĕ юлташсем патне кайса килем.

Апуç курăнми пулсан, Венюк пурăран тухасшăн пулчĕ, анчах ăна Актай тытса чарчĕ. Ыт ахальтен чарман вăл юлташне, пура çумĕпе асламăшĕ таçтан киле таврăннине курнă.

Актай асламăшĕ, Уçук кинемей, пӳрт умĕнче туйи çине тайăнса тӳпенелле пăхса илчĕ. «Ах, тупата,— мăкăртатрĕ вăл,— тавралăх тĕттĕмленсе килчĕ. Çумăр пулать-ши? Çумăрĕ питĕ кирлĕ-ха. Пăрлă çумăр кăна ан пултăр. Вăрманти фермăра Актай мăнукăм тепле пурăнать ĕнтĕ. Питĕ каясшăнччĕ, ĕç тухмарĕ».

Уçук кинемей крыльца алăкне уçса килне кĕрсе кайсанах Венюк пурăран сиксе анчĕ.

— Ăçта тухан халех, ир вĕт-ха,— чарасшăн пулчĕ ăна Актай. Лешĕ итлемерĕ, вара хăй те тухрĕ ирĕксĕрех.— Купăсна хăвар, вăл сана ещĕк çĕклеме чăрмантарать.

— Мĕнле ещĕк? — тĕлĕнсе ыйтрĕ Венюк.— Ман купăс калама каймалла, хăвах пĕлен, укçине илнĕ.

— Çу-ук. Малтан иксĕмĕрĕн вакунран пĕрер ещĕк çĕклесе тухмалла та Апуçа тыттармалла.

— Мĕн-мĕн? Ещĕк?

— Ахă.

— Мĕншĕн?

— Ăна эпир мар, Апуç пĕлет.

— Тăхта, тăхта. Ку вĕт мĕн...

Венюк шухăша путса çапла каласа хучĕ:

— Пĕлетĕн-и, кам вăл? Вăл — бандит! Пире вăрлама ярать!

— Мĕн эсĕ асар-писер тарăхса кайрăн? — терĕ Актай.— Вакунран ещĕк çĕклесе тухма йывăр-и-мĕн пире? Ĕçне тусан пичче патне илсе каять. Эсĕ те пыр, тархасшăн.

— Сан пиччӳ шăпах вăрă! Вăл тĕрмере ларать!

Пиччĕшĕ пирки усал каланине Актай тӳсме пултараймасть. Вăл Венюк патне çывхарса пычĕ те халь-халь ăна пыртан ярса илесле хăтăрса пăрахрĕ:

— Пичче тĕрмере мар! Ăна кăларнă! Вăл Хура тинĕс хĕрринче пурăнать.

— Нивушлĕ ăнланмастăн, Актай! Ырă çын кам сана вакунтан ещĕк илсе тухма хушать? Вăл, хăйне тытасран хăраса, пире вăрлаттарасшăн.

— Тĕрĕсех-ши ача?

— Паллах, тĕрĕс!

— Мĕнле-ха вара вăл мана фотоаппарат пачĕ. Ыран каллех ăна тавăрса паратăп, тет...— иккĕленчĕ Актай.

— Хăй майлă çавăрасшăн пулнă вăл сана,— çийĕнчех тавăрчĕ Венюк.— Кала-ха, пиччӳрен çыру паракан çын çакă мар-и?

— Ăçтан пĕлен эсĕ ун çинчен?

— Кала тĕрĕссипе?

— Каламастăп,— пат татса хучĕ Актай.

— Эх, эсĕ те çав. Ху ним те пытармастпăр тесе тупа турăн.

— Ну, çавă,— тунмасăр καларĕ Актай.

— Тарар. Халех фермăна, Тина патне каяр. Ăна пĕтĕмпех каласа парар.

Актай туртăнса тăмарĕ. Вĕсем пура çумĕнчен хăпса пĕр-ик утăм çеç тунăччĕ, умра Апуç тăнине курчĕç. Апуç ачасене ярса та тытрĕ. Венюкăнне купăсне çăтăр-çатăр çăлса илчĕ те Актая тыттарса, ăна пурана пăрахма хушрĕ. Çак вăхăтра Венюк тĕттĕме тарма пикенчĕ, анчах ĕлкĕреймерĕ, Апуç пĕрре сиксех ачана ярса тытрĕ.

В е н ю к. Эпĕ пур пĕрех вăрлама каймастăп.

А п у ç. Каян! Мана вăрласа панăшăн ĕнтĕ эсĕ укçа та илнĕ.

Венюк. Суятăр!

Апуç. Эпĕ панă виçĕ тенкĕ укçа санăн халĕ те кĕсйӳнтех.

Венюк. Эсир ăна купăс калассишĕн патăр. Укçине каялла илĕр. Мейĕр! *(Укçине Апуç умне ывăтать.)*

Апуç. Укçана алă пусса илнине мантăн-и, айван? Вăрланă укçаран пай илни çинчен алă пуснă эсĕ унта. Халех çав хутпа пĕрле сана милицине илсе каятăп. Сана вăрă тесе тĕрмене хупаççĕ. Мана итлесен, эпĕ хушнине тусан, никам та, ним те пĕлмест. Кăмăлу пулсан, хампа пĕрле поездпа çӳреме илсе каятăп.

Венюк. Эпĕ вăрламастăп.

Ача хăнк! та сикменнине курсан, Апуç кĕсйинчен çĕçĕ туртса кăларчĕ. Актайпа Венюк иккĕш те шартах сикрĕç. Хăранипе пĕр-пĕрин çумне тĕршĕнчĕç.

— Куртăр-и?— терĕ Апуç, аллинчи çĕççине вылянтарса.— Мана итлемесен, сире вилĕм кĕтет. Пĕр шарламасăр тупикре тăракан вакун патне! Унтан, пĕрер ещĕк илсе тухатăр.

Апуç ачасене хăратса тăлпалантара-тăлпалантарах илсе кайрĕ.

Кăшт та вăхăт иртмерĕ, кунта вăрманти фермăран ачасем шавласа килчĕç. Вожатăй та пĕрлех. Шел, тусĕсене бандит илсе кайиччен çитеймерĕç. Мĕн кĕтĕ-ши икĕ ачана? Кусем те иккен пăшăрханса çӳреççĕ вĕсемшĕн.

— Пĕлсех тăратăп, Актай çывăрать,— тет ачасенчен тахăшĕ.

— Ой! Кантăкран шаккам-и, Тина?

— Шаккасса шакка та, ас ту, шăппăнрах,— хушать Тина.

— Уçук кинемей! Уçук кинемей! — чĕнет Урине, кантăкран шăкăртаттарса.

Пӳртре хăйăлти сасă илтĕнет: «Ах, мĕн пулнă-ши? Кам унта?»

Уçук кинемей кантăкне уçрĕ.

— Ку эпир-ха, Актай юлташĕсем,— сăмах хушрĕ Тина.— Актай киле тавăрăнман-ши тесе килтĕмĕр те.

Уçук кинемей чӳречерен пуçне кăларчĕ те: «Ара, ман кĕçĕн мăнукĕ вăрманти фермăра,— терĕ,— шкулта вĕренекенсемпе пĕрле. Чимĕр-ха, урама тухам».

Ачасем карах Тина тавра пухăнчĕç.

— Ăçта шырăпăр вĕсене? — ыйтрĕ Тина.

— Ой! Венюксем патĕнче мар-ши? — тет Урине.

— Кайса килер-и,— сĕнет Сяпук.

— Лайăх шухăш,— тет Тина.— Эсир, ачасем, пĕрле кайса килĕр. Эпĕ Уçук кинемейпе калаçам.

Ачасем килĕшеççĕ. Вожатăй ĕç хушни вĕсемшĕн темрен те хаклă. Тинăна хăйсемсĕр ниçта та ярасшăн мар. Çакăнтах кĕтсе ларма хушса хăварчĕç.



— Ах, чиперккесем, таҫта чуптарчĕҫ ĕнтĕ? — ыйтрĕ Уҫук кинемей, крыльца ҫине тухсан.

— Аякках мар. Часах килеҫҫĕ,— пĕлтерчĕ Тина.— Унччен кăшт сак ҫине ларса канмалла-и?

— Ия. Кил кунта, хĕрĕм,— чĕнчĕ кинемей, сак ҫине ларса.— Питĕ пĕлес тенĕччĕ-ха: ман мăнукăм ашкăнмасть-и? Эсир тӳрех калăр, пĕр именмесĕр. Ăш хыптармăш.

Тина пытарма шутламарĕ, тĕрĕссине каларĕ ватă ҫынна. Кинемей ăшаланса ӳкрĕ, ним тума аптрать. Ачисем-ҫке ытла шухă.

— Усал ĕҫе тытăнмарĕҫ-ши? — пăшăрханать карчăк.— Ăҫта каяс, мĕн тăвас? Аслине ҫапла упраймарăм вĕт.

Аран-аран ҫеҫ лăплантарчĕ кинемее вожатăй.

Кинемее кӳрентересрен сыхланса сăмах майăн ҫапла ыйтрĕ Тина:

— Сирĕн аслин ăраскалĕ мĕншĕн урăхларах пулчĕ-ха?

Уҫук кинемей ҫине те ҫине ассăн сывласа илсен тин хирĕҫ тавăрма мехел ҫитерчĕ:

— Йĕвенне ҫăварлăхласа пыракан ҫукран, хĕрĕм. Тăлăхсем. Ашшĕ вăрҫăран сусăрланса таврăнчĕ те пурăнаймарĕ, ҫĕре кĕчĕ. Амăшĕн те кун-ҫулĕ ҫавнашкалах кĕске пулчĕ. Ирĕке кайрĕ ача. Хам чараймарăм. Ватă. Чукун ҫул ҫинче шпанасемпе ҫыхланчĕ те, пĕтрĕ ман ҫын. Ӳссе ҫитичченех лекрĕ тĕрмене. Ах, апăрша.

— Ҫыру ярсах тăрать-и?

— Чылай вăхăт хут илеймерĕмĕр, хĕрĕм. Тем пулчĕ? Кĕтессе кĕтетĕп. Хам ывăлăн ачи. Ах, ăш хыппи. Халĕ ĕнтĕ вăл ҫитĕннĕ, каччă пулчĕ пуль. Авланма та вăхăт.

— Кинемей, сирĕн аслă мăнукăр киле хăҫан таврăнмалла?

— Пайтах куҫҫуль юхтартăм, татах темĕн чул юхтармалла...

Тинăпа кинемей ҫапла калаҫкаласа ларнă вăхăтра ҫывăхрах шăв-шав илтĕнме пуҫларĕ. Ура сассисем.. Тăп-тап-тăп чупаҫҫĕ... Такам хăвалать, такам таратъ! Чăнах, чăнах. Ак тахăшĕ шăхăрчĕ.

— Мĕн мурĕ ара ку? — пăшăрханчĕ Уҫук кинемей.— Ах, тур ҫырлах, инкек таврашĕ мар-и?

Ватăпа ҫамрăк иккĕшĕ те ура ҫине тăчĕҫ. Унталла-кунталла шикленкелесе пăхаҫҫĕ. Тĕттĕмре никам та курăнмасть. Каҫхи сасă темшĕн ҫынна ҫӳҫентерет.

Тавҫăрса илме вăхăт та пулмарĕ. Милиционер кап! тухса тăчĕ. Хăй хашкать.

— Юлташсем, кунтан ещĕк ҫĕкленĕ ҫын чупса иртнине курмарăр-и?

— Курмарăмăр,— терĕҫ.

— Эх, чи кирлĕ ҫыннине тытаймарăмăр.

— Кама хăвалатăр?

Милиционер çав тери васкасан та ик-виç сăмах каласа хăварчех: темле çын ачасене пломбă ваттарса вакунран ещĕк çĕклеттерсе кăларнă. Пĕр ачине тытнă, тепри — поезд çинчен ўксе юлнă.

— Ман пионерсем мĕншĕн килмеççĕ-ха? — терĕ вожатăй кулянса. Çав вăхăтра Урине, Сяпук, Суйка тата ыттисем кĕпĕрленсе çитрĕç. Чим, вĕсем такама çĕкленĕ. Хыçалта милиционер. Вăл Актая çавăтнă.

Тина пионерсене хирĕç ыткăнчĕ.

— Кама çĕклесе килетĕр эсир?

— Венюка!

— Мĕн пулнă? Ăçта тупрăр ăна? — ыйтрĕ вожатăй. Хăй хăпăл-хапăл çийĕнчи тумтирне хыврĕ те крыльца умĕнчи хăма çине сарчĕ, унта ачана вырттарма пулăшрĕ.

Пионерсем, икĕ юлташа шыраса Венюксем патне кайнă чух, чукун çул хĕрринче çынсем шавласа тăнине курнă. Унта чупса çитнĕ. Çĕрте çын выртнă — Венюк. Вăл шпалсем çывăхнех ўкнĕ. Тепле поезд айне лекмен. Ачасем Венюка вожатăй патне çĕклесе килнĕ.

— Ăна халех пулăшу памалла! — терĕ сехĕрленсе ўкнĕ Тина.— Вăл тăнне çухатнă.

— Ой! Паçăр калаçатчĕ-ха!

— Васкавлă пулăшу чĕннĕ. Халех кунта çитет!

Ку сăмахсене милиционер каларĕ. Тина ăна тин асăрхарĕ.

— Мĕнле пулса тухрĕ-ха ку инкек? — терĕ Тина.

Милиционер Актайпа Венюк çине кăтартса çапла каларĕ:

— Вакун çаратма пикеннĕ. Вăрă-ачасем.

Милиционер сăмаххи Тинăна çав тери кўрентерчĕ. Вăл хыттăн каларĕ:

— «Вăрă-ачасем» теме мĕнле хăятăр эсир?!

— Вăрă-ачасене вăрах темелле ĕнтĕ,— лăпкăн тавăрчĕ милиционер.

Уçук кинемей те кунта мĕн пулса иртнине чухларĕ. Вăл мăнукĕ умне пычĕ те: «Уттарам сана пиччў сукмакĕпе» тесе чутах пуç урлă туяпа ямарĕ.

— Актай,— чĕнчĕ йăвашшăн вожатăй,— сире вакун çаратма пиччўрен çыру панă çын илсе кайрĕ-и?

— Эсир ун çинчен те пĕлетĕр-и?

— Пĕлетĕп, пĕлетĕп. Çырăвне те вуланă. Эх, Актай, мĕн туса хутăн? Эпĕ кăмăлна хуçас мар тесе тўрех шарласшăн пулмарăм. Йăнăшрăм иккен.

Урине те сăмах хушмасăр тўсеймерĕ:

— Çын вырăнне хурса хăйне ачасем Артека яма йышăнчĕç. Эсĕ пур, ых...

Актайăн чĕри пăчăртанса килчĕ. Вăт ăнлан ĕнтĕ пурнăçа. Шкулта вĕреннĕ кунсенче ачасенчен нихăшĕ те вара алă

тăсасшăн марччĕ, сиввĕн пăхатчĕç. Вара хăй те вĕсене килĕштермен. Çавăнпа та вăл пĕр класра вĕренекенсем хăйне ыра тума пултарасса нихçан та шухăшламан. Халĕ акă никама та мар, ăна, Актая, пионерсен тĕнчери чи чаплă лагерне ярасшăн. Çав тери пысăк чыс вĕт-ха ку. Актай çак тарана çитсе те юнашар ларса вĕренекен ачасене хак пама пĕлмен! Куççуль пăчăртанса тухрĕ. Вăл пĕр савăнчĕ, пĕр хурланчĕ, такама тарăхрĕ.

Тăкăрлăка машинă çитсе чарăнчĕ. Васкавлă пулăшу машини. Часах шурă халат тăхăннă икĕ çын ачасем патне пычĕç. Пĕрин аллинче носилкă. Тепри Венюкăн юн тымарне тытса пăхать, чĕрине итлет. Сумкинчен тем кăларчĕ, тем шăршлаттарчĕ.

— Пурăнайĕ-ши? — ыйтрĕ Тина, çав тери пăшăрханнăскер.

— Аптрамасть,— пĕлтерчĕ врач,— чĕри аванах ĕçлет.

Врач çапла çеç калама ĕлкĕрнĕччĕ, Венюк чăнах та куçне уçрĕ, пуçне çĕклерĕ. Тинăна курчĕ те ун куçĕнчен шăтарасла пăхрĕ:

— Тина, эсĕ ăна качча ан кай. Вăл... Апуç пĕтерчĕ...

Ача сăмахне вĕçне çитерейменрĕ, каллех тăнне çухатрĕ.

— Аташать вăл! Ним тăхтамасăр больницăна ăсатмалла! — терĕ Тина хыпаланса.

Венюка носилкă çине хучĕç.

— Урине, Сяпук, ачасем! Венюка илсе каякан машинă хыççăн больницăна кайăр. Эпир кăшт каярах çитĕпĕр.

Венюка ăсатрĕç. Пӳрт умне Тина, милиционер, Актай, Уçук кинемей тăрса юлчĕç.

— Милиционер юлташ, мĕн тума шутлатăр эсир ку ачасене? — ыйтрĕ Тина.

— Суд тума тивет,— тавăрчĕ милиционер.

— Сирĕн тараканнине, чăн-чăн вăррине тытмаллаччĕ. Ачасене вăл илĕртнĕ вĕт-ха,— терĕ Тина, Актай аллине ярса тытса.

— Леш тарнине тытатпăрах. Аякка каймасть,— терĕ милиционер.

Унăн сăмахĕ Тинăна татах сатурлантарчĕ, вăй пачĕ.

— Кунта пĕр-пĕрин айăпне шыранинче нимле усă та çук,— терĕ вăл.— Сире эпĕ комсомолла сăмах паратăп: çак çамрăк ачасене — Актайпа Венюка — тӳрĕ кăмăллă çынсем туса ӳстерме пирĕн коммунизмла ĕçлекен бригадăн вăй çитеĕклĕ. Халĕ ачасем шăпах пирĕн патăрта — практикăра. Çу вăрăм, хам эпĕ тин çеç асăннă бригадăн членĕ, комсомолкă тата вожатăй. Çак ачасене тӳрĕ çул çине кăларас тесе, пĕтĕм пĕлĕве, вăйăма паратпăр. Ĕненĕр.

— Сире ĕненес, малтанах тав туса хурас килет,— пĕлтерчĕ шухăшне милиционер.— Çапах та Актайăн халĕ станцири

милици уйрăмне кĕрсе тухмах тивет. Калаçмаллисем, ыйтса пĕлмеллисем пур. Венюкпа та пирĕн калаçмаллах пулать.

— Милиционер юлташ, сирĕнтен юлмастпăр эпир,— пат татса каларĕ Тина.

— Ах, турашка, юлмастпăр. Ĕçе хăнăхтарма кĕçĕннипе пĕрле хам та акă фермăна каятăп. Çын тăватпăрах. Ия,— мăкăртатрĕ Уçук кинемей.

Тинăпа кинемей Актая илсе каякан милиционертан юлмарĕç, ун хыççăн утрĕç.

## 9

Вăрманти фермăра пурнăç вĕресе тăни сисĕнет. Çамрăк практикантсене ырăпа асăнаççĕ. Маттурскерсем. Ĕçе вĕренсе çитесшĕн тăрăшаççĕ. Арçын ачасем электродоилкă лартнă çĕрте, хĕрачасем ытларах ĕнесем патĕнче.

Сяпук стена хаçачĕ кăларать. Илле бригадир килнине курсан, ача хĕпĕртесе ӳкрĕ.

— Илле пичче! — чĕнчĕ вăл куларах.— Пăх-ха, пирĕн стена хаçачĕ лайăх-и?

Бригадир, кăмăллăскер, ача патне пычĕ те хаçата тимлĕн пăхса каларĕ:

— Ай-яй! интереслĕ заметкăсем пур иккен кунта,— мухтарĕ вăл, хаçата саркаласа пăхса.

— Акă чаплă заметкă: «Эпир бригадăна юласшăн». Уринепе Суйка çыраççĕ. Вĕсем çу каçипех кунта юласшăн. Сирĕнтен ирĕк ыйтаççĕ. Акă тата тепĕр заметкă: «Манăн йăнăш». Актай çырать. Йĕплĕ çăмах кĕтесĕ те пур,— ăнлантарать редактор. Унăн пурин çинчен те пĕлтерес килет. Çапах та хăй çырнă заметкине аллипе хупларĕ те именерех каларĕ:

— Эпĕ çырнине ан та вулăр.

— Мĕншĕн? Мĕнле вăрттăнлăх пур унта сан? Е эсĕ Уринепе Суйка пек бригадăна юласшăн мар?

— Мĕн эсир, Илле пичче. Сире тав туса çыртăм. Анчах илемлĕ тухмарĕ.

— Мана тав туса? Çĕнĕ хыпар,— кулкалать бригадир.— Мĕншĕн тав тăватăн-ха эсĕ мана?

— Ĕçе вĕрентнĕшĕн. Эпĕ ку таранччен электричествă мĕн иккенне лайăх ăнланман.

Вĕсем хаçата стена çумне çакма пикенчĕç. Анчах ниçтан та çаклатма çук. Илле бригадир Сяпука кнопкăсем илсе тухма хушрĕ.

Тина килсе тухрĕ:

— Хаçат кăлараканне кăмăлтан салам! — терĕ вăл.

— Сывлăх пултăр! Практикантсем кăларнă хаçата курма килĕр!

Пӳртрен Сяпук кнопкăсем илсе тухать. Виççĕшĕ те пĕрле стена хаçатне çакма тытăнаççĕ.

Уринепе Актай сĕт бидонĕ йăтса килчĕç. Актайăн яланхи пекех пиçиххи хушшинче кĕнеке. Хыçранах Суйка та çитрĕ. Ун аллинче шурă халат.

— Ой! Тина, пĕлетĕр-и! — терĕ Урине, сĕт бидонне çĕре лартса,— паян эпир ула ĕнене хамăрах сурăмăр.

— Ан мухтан! — чарчĕ ăна Актай,— пĕр ĕнене иккĕн сурăр вĕт-ха.

— Мĕнех вара,— хута кĕме васкарĕ Суйка,— пирĕн ала вăйĕ çитмест пулсан...

Хĕрачасем сăмах айне юлмарĕç, мĕн каламалли Уринен çийĕнчех тупăнчĕ:

— Ой! Ĕнене текех алăпа сума кирлех те мар. Ыран, хăвăрах каларăр, электродойкă ĕçлеме пуçлать.

Актай пӳрт тăпрасси çинче ларакан витрене илсе кӳл хĕррине утрĕ. Вăл аякка каймарĕ, ăна Тина чĕнчĕ.

— Пĕтĕм ачасем Венюка илме больницăна каяççĕ. Эсĕ ма васкамастăн?

— Эпĕ юлатăп,— терĕ Актай.— Манăн тынашкана шăвармалла. Паçăр ăна курăк хӳхĕм ӳсекен уçланкăна кăкарса хăварнăччĕ.

Тĕрĕссипе илсен, Актайăн Венюка илме çав тери каяс килетчĕ. Анчах май килмест. Пĕрле вĕренекенсем Венюкпа иккĕшне хăйсен йышне йышăннăранпа вăл пайтах шухăшларĕ. Пурăнасса сахал пурăннă, йăнăшсем вара пур. Тепле пулсан та юсанмалла. Апуç ятлă çынна вăл хăй аллипе милицие тытса парасшăн. Актай вăрманта паçăр çеç Апуçа курчĕ. Лешĕ асăрхиччен вăл вĕлт çеç юман хыçне пытанчĕ. «Ы-ых,— шăлне шăтăртаттарчĕ Актай, чышкипе Апуç кайнă еннелле юнаса.— Каллех пире илсе каясшăн йăпшăнса çӳрет пулĕ-ха. Каятпăр сана, кĕтсех тăр. Эпир текех ухмах мар...»

«Тытмалла!» — Çак чăрсăр шухăш Актая халь вăрманалла çул тыттарчĕ.

Венюк патне больницăна каякансем часах пурте пуçтарăнчĕç. Машинă килсе çитнĕ. Ачасем çуйăхаççĕ, выляççĕ.

Машинă ерипен тапранчĕ. Малтанах Тина машинăпа шай утрĕ. Унтан машинă хăйĕн хăвăртлăхне ӳстернĕçемĕн ӳстерчĕ. Тина чарăнчĕ. Вăл мĕн машинă куçран çухаличченех аллипе сулчĕ.

Машинăна пĕр Тина çеç мар, тунката хыçне пытаннă Апуç та тимлĕн сăнаса ăсатрĕ. Куçĕпе вăл ачасен хушшинче Актая шырарĕ. «Эппин вăл фермăрах, ăна манăн тупмалла»,— шухăшларĕ вăл.

Тина юрă юрласа столовăй еннелле утрĕ. Унта Уçук кинемее курмалла, Актая Артека кăларса яма хатĕрлемелле.

— Сывлăх сунатăп, Уçук кинемей! — терĕ Тина кухньăна

кёнё-кёмен.— Кинемей, эпё Актай валли кёпе çёлерём. Пырса куратăн-и?

— Кёпе? Ан тёлёнтер. Кай, ытла ырă кăмăллă хёр эсё, ăçтан пулма пёлнё?..

Карчăк кăмăллăн хёр хыççăн тухса утрё.

...Фермăран инçех те мар, сукмак хёрринчи хуçăлса аннă йывăç туратти çинче, Актай кёнеке вуласа ларать. Умёнче — тулли шыв витри. Хушăран пăру макăрни илтёнет.

— Тăхта! Тўс пăртак, халех шыв илсе пыратăп!— кăшкăрать Актай, пăру макăрнă еннелле çаврăнса... Çапах та кёнекерен уйрăлаймасть. Кёнеки питех те интереслё ёнтё. Пăру тени ăна чухламасть. Макăрать те макăрать. Актай сиксе тăрать те кёнекене çат! хупать. Ăна тунката çине хурса шыв витрине йăтса каять.

Унччен те пулмасть, тепёр енчен Апуç сиксе тухрё. Вăл Актай çурăмне кăшт курса юлчё.

— Тинех йёр çине ўкрём,— терё вăл.— Халё ку ача е манăн пулать, е леш тёнчене ăсанать.

Апуç тунката патне пычё. Кёнекене алла илчё. «Аркадий Гайдар. Параппанçă кун-çулё». Кёнекене çёре пăрахрё те, сукмак çине тухса, Актай кайнă еннелле утма тăчё. Анчах калаçнă сасăсем илтёнчёç. Вара вăл айккинелле пăрăнчё.

Сукмакпа Тина тата Уçук кинемей калаçса пыраççё-мён.

Уçук. Кёçённине нимпе те куç умёнчен çухатас марччё.

Тина. Пăрăва шăварма çеç каятăп, терё. Таçта, кăшт шаларах кăкарчё-ши? Пăрăва питё шеллет.

Уçук. Шеллени аван-ха. Ах, шеремет, усал шухăш кăна ан тыттăрччё.

Тина. Текех ун пек пулмё ёнтё. Хăвăр фермăра пурăнма пуçланăранпа Актай ёçе юратса туни сисёнет.

Уçук. Мур пёлет-и, леш çын каллех килсе илёртсе кайё.

Тина. Ку таранччен милици вăл çынна тытнă та-и, тен.

Уçук. Тем пекехчё. Ăçта-ха ку пирён Актай?

Ватăпа çамрăк çапла шăкăл-шăкăл калаçса сукмакпа вăрман ăшнелле утрёç.

Кăшт тăрсан, сукмак çине пёр енчен Актай, тепёр енчен Апуç тухрёç. Вёсем иккёшё те пёр-пёрне пёр харăс курчёç. Самант иккёшё те тапах чарăнчёç. Куçа-куçăн пăхса тăраççё, пёр-пёрин патне çывхарнăçемён çывхараççё. Актайăн аллинче пушă витре.

— Салам! — сăмах пуçласа каларё Апуç.

— Сывлăх сунатăп! — терё Актай та.

— Сана илме килтём,— пёлтерчё Апуç.— Пиччў каллех çыру янă. Шăллăма илсе кил, тесе çырать.

Актай хёпёртенён ыйтать:

— Пичче? Çыру çырнă терён-и?

— Ара çав. Атя каяр, никам курман чух. Пире позед кĕтет.
— Каяр, каяр! — чееленсе калать Актай.
— Эпĕ пĕлсех тăнă, эсĕ ырă кăмăллă ача иккенне. Эсĕ пиччӳн чăн-чăн тĕрĕс шăллĕ. Васкар!

Апуç Актая мухтаса çурăмĕнчен лăпкать. Ача хăй хыççăн пырасса ĕненсе мала иртрĕ. Анчах çак вăхăтра Актай Апуç пуçне пуш витре тăхăнтартрĕ те ăна ура хурса ӳкерчĕ. «Килĕр, краул!— кăшкăрчĕ хăй пĕтĕм вăйран.— Пире пĕр хут улталарăн,— тет Актай тĕркĕшнĕ май.— Эсĕ нимле чукун çул çинче ĕçлекен çын та мар. Эсĕ — вăрă-хурах! Эпир тек ухмах мар».

Апуç, хаярланса кайнăскер, часах ун аллинчен çăлăнса тухрĕ, ăна хăй айне пĕтĕрсе чикрĕ.

— Шĕпĕн! — терĕ Апуç шăл витĕр.— Кама тапăнан? Сана халех, мăйăнтан кантрапа пăвса, сĕтĕрсе каятăп.

Усал этем ача аллине кантрапа çыхасшăн тапаçланать.

Аякра машинă кăшкăртни илтĕнчĕ. Сукмак çине ним кĕтмен çĕртен ачасем кĕшĕлтетсе тухрĕç. Кусем, больницăна Венюка илме кайнăскерсем, иккен. Илле бригадир та пĕрлех. Вĕсем фермăна тӳртен тухма килĕшнĕ.

Вĕсем çĕрте икĕ çын тĕркĕшнине курсан малтанах ним те тавçăрса илеймерĕç. Илле бригадир кăна:

— Чарăнăр! Мĕн аташатăр эсир? — терĕ.

Апуç siксе тăчĕ те вăрмана ыткăнчĕ.

— Ан тартăр! Тытăр ăна! — кăшкăрчĕ Актай.

— Ара ку Апуç текенни вĕт. Вакунран пире ещĕк илсе тухтараканни! — палласа илчĕ Венюк çавăнтах.

Ачасем шавлама тытăнчĕç. Апуç хыççăн Илле бригадир, Сяпук тата ытти ачасем чупрĕç. Уринепе Суйка Актай аллине салтма тытăнчĕç.

— Хăвăртрах, хăвăртрах салтăр-ха. Эх, эпĕ те çав. Çемçеккей!— Хăйне хăй тарăхать Актай.

— Халех,— тет Суйка.

— Ой! Ăçтан тĕл пулнă вăл сана? — ыйтрĕ Урине.

— Хамăр кунта килсе тухман пулсан, сана вĕлеретчĕ,— сăмах хушрĕ Суйка та.

Хĕрачасене Актай апла та, капла та шарламарĕ.

Ачасен сассине илтсе ĕнтĕ Тина хыпаланса çитрĕ. Вăл, Актай çĕрте выртнине курсан, тĕлĕнсех кайрĕ.

— Шел,— терĕ тинех Актай,— вăй çитереймерĕм. Пуçне витре тăхăнтарса урараи ӳкертĕм эпĕ ăна, çыхса пăрахасшăнччĕ, анчах ĕлкĕреймерĕм.

Уçук кинемей те çитрĕ. Ăна хĕрачасем хыпалансах Актай инкеке лекни çинчен ăнлантарчĕç.

— Ах, тем курăпăр,— пăшăрханса ӳкрĕ асламăшĕ.— Мĕнле тӳсрĕн? Хытă асаплантарчĕ пулĕ?

— Ку асап тӳсни мар,— тавăрчĕ Актай.

Аллине çыхнă кантрана салтсан, Актай йăпăр-япăр ура çине сиксе тăчĕ. Вăл Апуçа хăваласа кайнă еннелле чупма тытăннăччĕ, анчах Уринепе Суйка кăшкăрса та ячĕç:

— Тытнă хайхине! Тытнă! Вăт ирсĕр этем!

Чăнахах та вăрă-хураха тытнă-мĕн. Аллине каялла çавăрса çыхнă. Чи малтан ăна уттараççĕ, ун хыççăн Илле бригадир, ачасем пыраççĕ.

Тина хăй куçĕпе мĕн курнине хăй ĕненмест.

— Студент?— терĕ тĕлĕнсе.— Мĕнле-ха? Эпĕ...

Тина Актая ыталарĕ, пуçĕнчен алă çупкамĕпе шăла-шăла илчĕ. Ачашларĕ.

— Пăх-ха, пăх,— кăт- кăт тĕртрĕ Урине кинемее, Апуç çине кăтартса.— Сирĕн Актая вăрман варринче çыхса пăрахаканĕ çакă ĕнтĕ.

— Эпĕ ăна, путсĕре, кӳр-ха питĕнчен сурам е туяпа çурăм урлă хурам! Пĕчĕк ачасен пуçне минретсе ан çӳретĕр! — терĕ Уçук кинемей хаяр сассипе.

Ватă хĕрарăма çул парса пурте карах сирĕлсе тăчĕç. Вăл мăнаçлăн таплаттарса çамрăк çын умне пычĕ. Туйине чĕтрентерсе çӳлелле çĕклерĕ çеç, иккĕшин куçĕсем тĕлме-тĕл пулчĕç. Юнаса çĕкленнĕ туя сывлăшра тăп хытса тăчĕ. Унтан, чĕре ани татăлса кайнăн, кинемей ы-ых! тесе йынăшса илчĕ. Аллинчи туйи шуса анчĕ те çĕре ӳкрĕ. Анчах çавăнтах пĕтĕм вăйне пухса кăшкăрса ячĕ:

— Атсемĕрсем! Ара, ку — манăн аслă мăнукăм — Ваçик!

Никам та пĕр сăмах чĕнме пĕлмерĕç. Кинемейĕн аслă мăнукĕ те сас кăлармарĕ. Вăл чăн-чăн суд тинех çитнине питĕ лайăх ăнланчĕ пулас.

Кинемей пуçне ерипен пăрса, вăйсăрланнă куçĕпе тĕрек шыранăн, ачасене пĕрин хыççăн теприне пăхрĕ. Акă Актай. Вăл, Тина вожатăй çумĕнче тăраканскер, асламăшĕ патне ыткăнчĕ.

— Кăвакарчăнăм,— терĕ асламăшĕ, пĕчĕк мăнукне çурăмĕнчен лăпкаса,— кур акă, ку санăн пиччӳ.

Актай аллисене çыхнă çын çине тарăхса пăхса илчĕ те асламăшне хыттăн, хыттăн ыталаса çапла каларĕ:

— Ĕненместĕп! Вăл — ман пичче мар!

Çак вăхăтра ушкăна икĕ милиционер çитсе тăчĕç. Вĕсем те вăрă-хурах йĕрĕ çине ӳкнĕ пулнă.

Уçук кинемей аслă мăнукĕ умĕнчен палт çаврăнчĕ те кĕçĕннине çавăтса малалла утрĕ.

— Атьăр, каяр кунтан, пепкемсем,— чĕнчĕ вăл ыттисене те,— пире кирлĕ çын мар вăл!

Хирĕçлекенсем тупăнмарĕç. Ачасем пурте кинемей хыççăн фермăналла кайрĕç. Тина вожатăй — хыçалта. Пионерсен хӳтĕлĕхĕ вăл. Ӳснĕ чух аслисен хӳтĕлĕхĕ пит хаклă.

Туссем уçланкăна çитрĕç. Хĕвелĕ хаваслă пăхать. Сывлама

ҫăмăл, тин ҫеҫ ҫумăр ҫуса иртнĕ тейĕн. Ешĕл йывăҫсем ҫинче кайăксем юрлаҫҫĕ. Пулса иртнĕ инкек ҫинчен асăнакан ҫук. Пурин те выляс, кулас, сикес килет. Кăмăлсем ҫĕкленӳллĕ.

Актай вожатăй патне чупса пырать:

— Тина, Тина! — тет вăл, ăна аллинчен ярса тытса.— Эпĕ Артека каймастăп!

Тина. Мĕншĕн, Актай?

Актай. Артека Венюк кайма тивĕҫлĕ. Вăл пуринчен те паттăр. Тата вăл тин ҫеҫ больницăран тухнă. Унăн сывлăхне ҫирĕплетмелле.

Актай кĕсйинчен путевкине кăларса Венюка парать. Пурте алă ҫупаҫҫĕ. Анчах Венюк путевкине илесшĕн мар, турткалашать.

Урине. Актай тĕрĕс тăвать.

Суйка. Ил, Венюк, путевкăна.

Урине. Телейлĕ ҫул пултăр сана, Венюк!

Йăл кулать Венюк. Юлташне ыталаса илет те калать:

— Тавтапуҫ сана, Актай! Тавтапуҫ, тус-тантăшсем!



Цена 13 коп.

*Для детей младшего*
*и среднего школьного возраста*

*Эльби Валентина Андреевна*

ВСТАНЬТЕ В ХОРОВОД

Рассказ и повесть

На чувашском языке

Редактор **Ю. П. Петров**
Художественный редактор **Э. М. Юрьев**
Технический редактор **А. Ф. Никитина**
Корректор **С. Л. Баранова**

НТ 01836. Сдано в набор 14-X-1964 г. Подп. к печ. 1-XII-1964 г.
Изд. № 145. Формат 60×90/16. Объем 3,75 печ. л.
Уч.-изд. л. 3,85. Заказ № 3937. Тираж 3500 экз. Цена 13 коп.

Чувашкнигоиздат, Чебоксары, К. Маркса, 36.

Типография № 1 Управления по печати
при Совете Министров Чувашской АССР
Чебоксары, Володарского, 5.